21-45

...ççĕй хветератсийĕн сотсиалисăмпа канаш республикки.

Пĕтĕм тĕнҫери пролеттарисем, пĕрлешĕр!

ФОНВИЗИН.

# ҪИТĔНЕЙМЕНСКЕР,

## 5 пайлă комеги.

(Недоросль, ком. в 5-ти действиях).

На чувашском языке.

Тĕп Ҫăваш пайĕ кăларнă.

ИЗДАТЕЛЬСТВО
Центрального Чувашского Отдела при Народном Комиссариате
по национальным делам.
Хусан—1921 çул.

Раççей Хветератсийĕн Çотсиалисăмпа Капаш Респувликки.

Пĕтĕм тĕнҷери пролеттарисем, пĕрлешĕр!

ФОНВИЗИН.

# ÇИТĔНЕЙМЕНСКЕР,

## 5 пайлă комеги.

(Недоросль, ком. в 5-ти действиях).

— НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ. —

Тĕп Ҷăваш Пайĕ кăларнă.

Издательство Центрального Чувашского Отдела
при Народном Комиссариате по национальным делам.
Хусан—1921 çул.

Р. В. Ц. Казань 4000 экз.

Казань, 3-я Государственная Типография, 1921 г.

## ВЫЉЂАКАНСЕМ:

**Простаков.** Помешђик.

**Простакова.** Унăн арăмĕ.

**Скотинин.** Простаковăн тăванĕ.

**Митрахван.** Çитĕнейменскер Простаковăсен ăђи.

**Сухви.** Тăлăх хĕр. Простакăвасем ăна усрама илнĕ.

**Милон.** Сухвинĕ йуратакан охвитсер.

**Старотум.** Сухвин куккăшĕ.

| | |
|---|---|
| Куттейкин.<br>Ђихвиркин.<br>Враљман. | Митрахвана хутла вĕрентекенсем. |

**Тришка.** Çĕвĕç.

Йеремейевна. Тарçă.

Правтин. Ђиновник.

**Камертинер.**

# 1-МĔШ ПАЙĔ.

## 1-мĕш куранни.

Простакова, Митрахван тата Йеремейевна.

Простакова. (Митрахван сăкманне пăхса). Сăк мана пĕтĕмпех пăснă. Йеремейевна, ҫĕнсе кил-ха ҫав путсĕр Тришкăна. (Йеремейевна кайат). Сăкмана ăҫта-килҫĕ унтан тăвăрлатса пĕтернĕ. Митрахван, сана, ҫунăм, сăкман ансăр пулмалла—хĕсет пулĕ. Кайса ҫĕн-ха ăҫуна (Митрахван кайат).

## 2-мĕш куранни.

Простакова, Йеремейевна, Тришкă.

Йеремейевнапа Тришкă кĕреҫҫĕ.

Простакова. (Тришкăна). Ах выҫăх, кил-ха ҫывăхарах. Каламарăм-и вара еп сана сăкманне шăлпартарах тăв тесе? Аҫа тăвăр сăкмансăр та плевлĕ ӳсет. Мĕн каласа хăвăн айăпна сирес тетĕн есĕ?

Тришкă. Епĕ, сутарыҫа, ҫĕвĕҫĕ ĕҫне хам анҫах вĕренкеленĕ тесе пĕр кунах каларăм-ҫке. Ҫавăн ҫухнех ҫĕвĕҫе парăр терĕм сире.

Простакова. Апла пулсан сăкмăн çĕлемешкĕнех çĕвĕçĕ пулмалла-и? Калаçат выҙăх пек.

Тришкă. Çĕвĕçĕ вĕрепле хăй ĕçне, епĕ çук.

Простакова. Тата выҙăх тавлашат-е? Пĕр çĕвĕçĕ тепĕринҙен вĕреннĕ, тепĕри виççемĕшĕнҙен, малтанхи, малтанхи сĕвĕçĕ камран вĕреннĕ? Кала, выҙăх!

Тришкă. Малтанхи кам пĕлет, манран та наҙар çĕленĕ пулĕ-ха.

Митрахван. (Ҙунса кĕрет). Ҙĕнтĕм аттене, халех килеп, терĕ.

Простакова. Кайса сĕтĕрсе кил, ҙĕнсе килмест пулсан. (Простаков кĕрет).

Митрахван. Ак атте, те çитрĕ.

## 3-мĕш курăнни.

### Çавсемех тата Простаков.

Простакова. Мĕн есĕ манран пытанса çÿретĕн-и мĕн? Ак есĕ нимĕн ҙĕнмен пирки мĕне çитсе тăрăнтăмăр. Мĕнле тумтир çĕленĕ аҙана куккăш туйне?.. Мĕнле сăкман çĕленĕ Тришкă, пăх-ха?

Простаков. Шăл-шăлпартарах пăртакçă.

Простакова. Хăв есĕ, ухмах пуç, шăлпар.

Простаков. Епĕ, есĕ хăв çапла шухăшлатăн пулĕ тесе.

Простакова. Есĕ хăв, суккăрлантăн-и мĕн?

Простаков. Есĕ пур ђух ман куççем нимĕн те курмассĕ.

Простакова. Ех, мĕнле упăшка пађĕ мана турă: тăвăррипе шăлпаррине уйăраймасть.

Простаков. Вăл тĕлĕшрен епĕ сана анђах ĕненетĕп.

Простакова. Апла пулсан, есĕ ак çакна та ĕнен, епĕ çакăн пĕк пуђсĕрсене касармастăп. Халех, кайса çаптар ăна.

### 4-мĕш курăнни.

Çавсемех тата Скотинин.

Скотинин. Кама? Мĕншĕн? Мана хĕр килĕшес кун-и? Çавна курассĕ, йăмăк, пайан ан тив ăна, ыран хам та пулăшăп. Тарас Скотинин та пулмастăп пур айăпа та айăпламасан. Çав йенђен епир, йăмăк, иксĕмĕр те пĕр танах. Мĕншĕн-ха есĕ питĕ хархашма тытăннă капла?

Простакова. Ак есĕ хăв пăх-ха ђипертерех куçупа Митрахван, кил-ха кунтарах. Мĕнле, шăлпар мар-и çак сăкман?

Скотинин. Çук.

Простаков. Епĕ халĕ хам та куратăп тăвăрне.

Скотинин. Тăвăр та мар. Пит аван çĕленĕ сăкмана Тришкă.

Простакова. (Тришкăна). Тухса кай кунтан, вылҕăх. (Йеремейевнана). Йеремейевна, кайса çитер-ха аҕана. Вĕрентекенĕсем те халех персе çитĕç.

Йеремейевна. Вăл хаљ те пилĕк авăрлă кулаç çисе йаҕĕ.

Простакова. Пиллĕкĕшне çирĕ пулсан, улттăмăшне пар. Пăхăр-ха, ăна, е?

Йеремейевна. Маншăн пулсан лўпкетĕр... Епĕ Митрахван Теренҕиҕшăн каларăм. Кĕçĕр иртенех сĕлкĕм çўрерĕ, пăл çавăнпа...

Простакова. Ах турă! Мĕн пулҕĕ сана тата, Митрахван ҕупăм?

Митрахван. Ахалех анне! Ĕнер каçхи апат хыççăн пăртакçĕ...

Скотинин. Апата пит аван хурăн пулмалла, шăлнăм.

Митрахван. Епĕ, кукка, пĕртте çимен пекех.

Простакова. Çицĕ пек астăватăн-çке епĕ, ывăлăм.

Митрахван. Мĕн, виç татăк аш, пиллĕк çăв, улттă-и, кукăљ çирĕм унтан.

Йеремейевна. Çĕрле пĕр кăпшăм йўçĕ ĕçсе йаҕĕ.

Митрахван. Халĕ те хырăм пакăртатса çўрет, çитменнине çĕрле кирлĕ мар тĕлĕксем куртăм.

Простакова. Мĕнле кирлĕ мар тĕлĕксем?

Митрахван. Сана куртăм, аттене те.

Простакова. Йепле-ха апла?

Митрахван. Ҫывăрса кайсанах есĕ аттепе хĕпенĕ пек.

Простакова. Пĕтрĕм, тĕлĕк шăпах пулҫĕ.

Митрахван. Ҫав тĕрлĕ хĕрхентĕм.

Простакова. Кама, Митрахван?

Митрахван. Сана, анне: питĕ ывăнтăн есĕ аттене хĕнесе.

Простакова. Ҫуп-ту мана, ывăлăм. Есĕ анҫах кăна ман ҫут тĕнҫере.

Скотинин. Ҫук, ес, Митрахван, аннӳ ывăлĕ пулмалла, аҫун мар.

Простаков. Ҫапах та епĕ ăна йуратататăп мĕн кирлĕ таран. Тĕлĕнмелле аҫа: хăш ҫух, савăннипе, хам ывăл темĕ те хăйаймастăп.

Скотинин. Анҫах халĕ тĕлĕнмелле аңҫу темĕшĕн сăмсине усна.

Простакова. Лекĕр патне йарас мар-и?

Митрахван. Кирлĕ мар, хамах ҫĕрĕлĕп. Кайам-ха епĕ кăвакарҫăнсене тустарма, мĕн те пулин...

Простакова. Ҫăнах та мĕн те пулин... Кайса выҫакала, Митрахван, ҫупăм (Митрахванпа Йеремейевна кайаҫҫĕ).

## 5-мӗш курӑнни.

Скотинин. Ман арӑм пуласси курӑнмаст-ҫке. Ӑҫта-ха вӑл? Калас пулат ӗнтӗ ӑна каҫҫа парасси ҫинҫен, каҫпала килӗшмелле пулӗ.

Простакова. Ӗлкӗрӗпӗр, шӑлнӑм. Малтанах каласа хурсан, аван мар, пуҫ-ҫапаҫҫӗ тейӗ тата. Упӑшки йенҫеп епӗ ӑна хурӑнташ пулатӑп та, анҫах йут ҫын пуҫ-ҫапнине те йурататӑп.

Простаков. (Скотинина). Ҫӑнах та, епир Сухвийе питӗ кӑмӑл турӑмӑр: ашшӗ хыҫҫӑн амӑшӗпе анҫах йулҫӗ, амӑшӗ вилни те ҫур ҫул ӗнтӗ...

Простакова. Турӑ сыхлатӑр!

Простаков. Унӑн пиҫҫӗшӗ Старотум Ҫӗпӗре кайрӗ те, пӗр сасӑ-ҫӗвӗ те ҫук: вилнех тетпӗр ӗнтӗ епир ӑна. Сухви пӗҫҫен йулнине кура, ӑна хамӑр пата илсе, хамӑр аҫа пекех пӑхса усреретпӗр...

Простакова.—Мӗн ес пайан пит каласма тытӑнтӑн. Шӑлнӑм Сухвийе хамӑр пата илнине урӑхла та ҫавӑрса йарӗ..

Простаков. Мӗн шухӑшламалла ун? Сухви именине хамӑра илме майӗ ҫук ҫке.

Скотинин. Именине илме пулат те, епӗ пуҫ-ҫапма йуратмастӑп. Мӗн тӗрлӗ мана кӳршӗсем айӑпламан пулӗ, мӗн ҫухлӗ парӑм тӳлемелле, ҫапах кайса ыйтмаст

Ун вырӑнне епӗ хамӑн хресҫенсенҫенех шӑйӑрса илетӗп парӑмсене те ӗҫ те пӗтнӗ.

Простаков. Ҫӑннипе каласан, таврари улнутсем ӑчтан кайаҫҫӗ епир хамӑр хресҫенсенҫен куланай пуххинҫен.

Простакова. Есӗ, шӑлнӑм, вӗрентсем пире. Хресҫенсенне мӗн пурне туртса илтӗмӗр, нимӗн те йулмарӗ илмешкӗн. Ҫав тӗрлӗ асап!

Скотинин. Вӗрентӗп, аппа анҫах Сухвийе каҫҫа парӑр.

Простакова. Мӗн ҫӑнах та кӑмӑлна кайрӗ-и мӗн сана ҫав хӗр?

Скотинин. Ҫук, мана хӗрӗ кӑмӑла каймасҭ.

Простаков. Кӳршӗри йалсем-и мӗн?

Скотинин. Йалсем те мар. Йалта пурӑнакансисем пит кӑмӑла кайаҫҫӗ.

Простакова. Мӗн апла?

Скотинин. Сысnасене йурататӑп. Ҫав йалсенҫе сыснасем питӗ пысӑк: хӑшӗ-хӑшӗ кайри ури ҫине тӑрсан пиртен пуринҫен те ҫӳлӗ.

Простаков. Ӑнтан каймалла: тӑван тӑван майлах. Пирӗн Митрахван та, уккӑшӗ пекех; сыснасене ытараймасҭ. Виҫҫӗре ҫухнех, сыснасене курсан, савӑннипе ҫӗтӗресе кайаҭҫӗ.

Скотинин. Тӗлӗнмелле! Митрахван куккăшне хунă, çавăнпа сыснасене йуратать. Епӗ мӗншӗн йуратататăп-ха сыснасене? Шухăшлăр-ха, кунта мӗн те пулин пӗр йăх мар-щи?

Простаков. Епӗ те пӗр йăх сирӗп тесе шухăшлататăп.

### 6-мӗш куранни.

Çавсемех та Сухви.

(Сухви çыру илсе кӗрет)

Простакова. Мӗн есӗ кулкалса килетӗп? Мӗн савăнăç сап?

Сухви. Епӗ халӗ питӗ савăнăçлă хыпар илтӗм. Манăн йуратнă пиҫҫе (еçир ăна вилнӗ теттӗр) çак кунсенҫе Мускава килнӗ. Акă унтан илнӗ çыру.

Простакова. Мӗнле? Старотум сапăн пиҫҫу, ҫӗрӗ! Есӗ вилӗмрен ҫӗрӗлнӗ тетӗн-и.

Сухви. Вăл вилме шухăшламан-та.

Простакова. Йепле! Унăн вилме те йурăмаст-и вара? Есӗ хăв шухăшласа кăларнă пиҫҫу вилӗмрен ҫӗрӗлнӗ, тесе. Есӗ манăн пиҫҫе ăслă çын, мапа çык аллинҫине пӗлсен хăтарӗ-те-тӗн пулӗ. Çавăнпа есӗ савăнан та Анҫах питӗ ан хаваслан, сан пиҫҫу вилӗмрен ҫӗрӗлменех вăл.

Скотинин. Тек-тĕр, аппа! Йе вăл вилмен пулсан?

Простаков. Турӑ сыхлатăр вилмен пулсан!

Простакова. Мĕн есĕ ĕçе пăтрататăн тата. Пĕлместĕн-и мĕн есĕ, епир темиçе çулђен вилнĕ тесе, кĕнеке çине вилнисем хушшине çырса хунине? Нирĕн çылăхлă кĕлĕ çитмерĕ-и мĕн турă патне? (Сухвине) кӳр-ха çыруна! Епĕ пĕлетĕп вăл мĕнле çыруне. Çав сана илесшĕн ахвитсертен пулĕ-ха вăл кам сана манран ыйтмасăр çырусене сан аллуна парать-ха? Пĕлĕп-ха еп ăна. Астăвăр-ха: хĕрсĕм патне çыру çыраççĕ, хĕрĕсем вулама пĕлеççĕ-е?

Сухви. Вуласа пăхăр, вара пĕлĕр мĕнлине

Простакова. Ху вула çырусене. Епĕ çырăва илме пĕлеп, вулама ыттисене паратăп (Упăшкине) Вула!

Простаков. Хĕнтерех!

Простакова. Сана та хĕр пекех пăхса ӳстернĕ пулмалла. Шăлнăм вула-ха есĕ.

Скотинин. Епĕ-и? Епĕ ĕмĕрне те вуласа пăхман, турă сыхларĕ халиђђен ун пек йапаларан Сухви.-Кӳр, хам вуласа парам.

Простакова. Пĕлетĕп еп есĕ вулама хастарне, анђах шанма пултараймастăп сана. Акă Митрахвана вĕрентекенĕ килĕ, çавна вулаттарăп...

Скотинин. Вулама та вĕрентме тытăнтăр-и ађана?

Простакова. Тытӑнмасӑр. Тӑват ҫула йахӑн вӗренет ӗнтӗ. Митрахвана вӗрентме тӑрӑшатпӑр, шӑлнӑм: виҫӗ вӗрентекене укҫа тӳлетпӗр. Вулама пукрав ђиркӗвӗнђи ђийеђук Куђђейкин вӗрентет, арихметтиккӑна Ђихвиркин, ҫершант пулнӑскер. Иккӗшӗ те хуларанах килеҫҫӗ. Хули инҫех мар: виҫ ҫухрӑм анђах. Хрантсусла калаҫма, ытти науккӑсене Атам Атамыђ Враљман вӗрентет тата. Кӑна 300 тенкӗ ҫултаlӑкне тӳлетпӗр, ҫитменнине кӗпе-йӗм ҫуса параҫҫӗ, ӑҫта килђӗ унта кайма лаша, сӗтел хушшине ларсан пӗрер курка ерех, Хума парик тӳрлетсе парат. Питӗ ырӑ кӑмӑллӑ ҫын: ађана асаплантармаст. Митрахван халӗ ҫамрӑк, тата вунӑ ҫултан, кам пӗлет, служит тума тытӑнсан темӗн те пулӗ, кама мӗн турӑ ҫырнӑ: пирӗн Простаков йӑхӑнђи ҫынсем ахаљ выртсах ђынсем илеҫҫӗ. Митрахванӑн мӗнле телей пулӗ? (Правтин кӗрет) Акӑ пирӗн йаланхи хӑна та ҫитрӗ.

## 7-мӗш курӑнни.

### Ҫавсемех тата Правтин.

Простакова. Акӑ сире паллаштарам-ха, ку манӑн шӑлнӑм, ку Правтин.

Правтин. Питӗ хавас санпа паллашма.

Скотинин. Аван, аван. Хушамту мӗнлеђђӗ-ха ҫак илтеймерӗм?

Правтин. Прӑвтин!

Скотинин. Ӑçти çӗр-шывран? Имени ӑçта?

Правтин. Çуралма епӗ Мускавра çуралнӑ, пӗлес килсен имени çак таврара.

Скотинин. Тектӗр, тектӗр, пӗр йапала ыйтам-ха санран... Мӗнле санӑн имениндҫи йалçендҫе мӗнле... сысна-сем нумай-и?

Простакова. Çитӗ сана сысна çиндҫен каласма. (Правтина) Акӑ мӗн: пирӗн хӗр çыру илнӗ хӑй пиҫҫӗпӗ-ндҫен, леш тӗнҫеренех çыраççӗ пуллмалла унӑн пиҫҫӗшӗсем. Вуласа пар-ха пире.

Правтин. Каçарӑр тархасшӑн, епӗ кама çыру çырнӑ, çав хӑй хушмасан вулама пултараймастӑп.

Сухви. Епӗ хам хушатӑп, çавӑнпа...

Правтин. Хушатӑр пулсан (вулат). Савнӑ йӑмӑкӑм. Хамӑн ӗççем пирки, нумайҫҫен ман хамӑн тӑвансен-ҫен айакра пурӑнмалла пулҫӗ, çавӑнпа есӗ ӑçта пурӑнни-не те пӗлме пулмарӗ. Халӗ епӗ Мускавӑ килтӗм. Темиçе çулҫҫен Çӗпӗрте пурӑнтӑм. Пурӑна киле çапах та пӗр 10.000-не йахӑн укçа ӗçлекелесе тупрӑм.

Скотинин. Вунӑ пин!

Правтин. Çав укçана епӗ сана парас тетӗп.

Простакова. Сана парасшӑн!
Простаков. Сухвине парасшӑн. } Пӗрле.
Скотинин. Ӑна парасшӑн.

Простакова. (Сухвине ыталаса илсе). Акă савăнтартăн мана есĕ, Сухви ђунăм. Халĕ ĕнтĕ сан кађђа тухас пулаť. Ђăнне каласан Митрахвана санран аван хĕр тупас ҫук. Акă сан пиђђу—йалан ҫав вилмен тесе, турă сыхларĕ пулĕ тесе шухăшлаттăм.

Скотинин. Ну аппа, хăвăртрах аллуна пар!

Простакова. (Шăппăн Скотинина) Тектĕр, малтан хăйĕнђен ыйтас пулаť, пырĕ-и вăл сана кађђа, ҫук-и?

Скотинин. Ку мĕн тата? Ђăнахах, ăна пуҫ-ҫапас тетĕн-и мĕн есĕ?

Правтин. Ҫыруне вуласа пĕтерес-и?

Скотинин. Кирлĕ мар. Пилĕк ҫул вуласан та 10.000 рен аванни шыраса тупас ҫук.

Простакова. Сухви, ђунăм, кайар-ха ман пӳлĕме, кайса калаҫар (Кайаҫҫĕ).

Скотинин. Пайак хĕр килĕшӳ пулмасť пулмалла.

## 8-мĕш курăнни.

Правтин, Простаков, Скотинин тата тарҫă.

Тарҫă. Улпут, улпут! Салтаксем пирĕн йала ђарăннă.

Простаков. Пĕтрĕмĕр! Пĕтермеҫҫи ĕнтĕ вĕсем пире.

Правтин. Мĕн хăратăн есĕ?

Простаков. Куçа кăтартма та хăратăп.

Правтин. Ан хăра—нимĕн те тăвас çук сире. Вĕсен командирĕ пур, вăл сире тивме памĕ. Аťа кайса палласштарам сире. (Кайаççĕ).

Скотинин. Пĕҫҫенех тăрса йултăм. Кайса картасенҫе выљăхсене пăхкалас пулĕ.

(*Ҫаршав хупăнаť*).

## 2-МĔШ ПАЙĔ.

### 1-мĕш курăнни.

Правтин тата Милон.

Милон. Ак çавăнăç! Йепле лекрĕн-ха ес ку çĕршыва?

Правтин. Мана çак наместниҫествона пăхса çÿреме йаҫĕç. Мĕн усал çынсене хам алла илсе, вĕсене хăйсем хресҫенĕсене хĕсĕрлеме пăрахтарма хушса йаҫĕç. Епĕ кунта виçĕ кун пурăнатăп ĕнтĕ. Пĕр ухмах уллутпа унăн тискер арăмне тĕл пултăм, çавсене пăртак алла илсен. Мĕн ес шухăша кайрăн? Нумайлăха ҫарăнтăн-и есĕ ку йалта?

Милон. Пĕр 5-6 сехетрен кайас тетĕп.

Правтин. Мĕншĕн васкатăн? Кан-ха пăртак.

Милон. Канма çук! Ман салтаксене хăвăртрах Мускава йертсе каймалла, çитменнине хам та ҫасрах çитесшĕн Мускава...

Правтин. Мӗншӗн апла?

Милон. Ак мӗншӗн. Сана анҫах каласа парам эп: пин. Пӗр ҫур ҫула йахӑн манӑн йуратнӑ хӗр ҫинҫен нимӗн сасӑ-ҫӗвӗ те илтместӗп. Нумай пулмасть епӗ ҫыру: ӑна вӗсен хурӑнташӗсем хӑйсем патне илсе кайнӑ иккен. Кам, ӑҫта илсе кайнине пӗлместӗп. Темӗнле ҫынсен аллине лекнӗ вӑл ӗнтӗ? Усал ҫынсем аллине лексен...

Правтин. Ак епӗ те ҫапла пӗр тӑлӑх хӗр усал ҫынсен аллине лекнине пӗлетӗп, анҫах ҫак кунсенҫе ҫав ҫынсене пӑртакҫӑ пусарас тетӗп.

Милон. Ех, телейлӗ ҫын есӗ: ҫапла тӑлӑхсене пулӑшма пултаратӑн. Епӗ нимӗн тума та пӗлместӗп.

Правтин. Йатне каласа пар-ха. (Сухви кӗрет).

Милон. (Хавасланнипе). Акӑ, вӑл хӑй те ҫитрӗ.

## 2-мӗш курӑнни.

Ҫавсемех тата Сухви.

Сухви. Милон, сана курмастӑп-и вара епӗ?

Правтин. Ак телей сирӗн!

Милон. Ак ҫакӑ епӗ ҫунтан-вартан йуратнӑ хӗр. Йепле есӗ кунта лекрӗн, каласа пар-ха.

Сухви. Ех, санран уйӑрӑлнӑранпа мӗн асап курман епӗ ҫак хамӑн хурӑнташсенҫен...

Правтин. Ан та ыйт, кайран хам каласа парăп мĕнле çынсемпе...

Милон. Нимĕне тивĕçсĕр çынсем.

Сухви. Пайан анҫах, мана пиҫҫе 10000 укçа парассине сиссе, мана аван калаçаççĕ. Хăйсен ухмах ывăлне каҫҫа илесшĕн мана.

Милон. Есĕ ăна хирĕç нимĕн те калаçмарăн-и?

Сухви. Çук...

Милон. Есĕ хăв ҫĕрӳне ытти аҫа алливе...

Сухви. Çук...

Милон. Халĕ пĕтрĕм ĕнтĕ. Куратăп вăл манран аванпе, куратăп. Аслă, вĕренне çын пулмалла вăл...

Сухви. (Кулса). Есĕ ăна курсан, тытăнăттăн кĕвĕçме!

Милон. Сисетĕп мĕпле çынне!

Сухви. Тĕлĕнмелле çын. Вунултта çитнĕ пулсан та, малалла вĕренӳ пулас çук унран.

Правтин. Йепле апла? Ҫасослов вĕренсе пĕтерет ĕнтĕ вăл, малалла псалтире тытăнаҫ пулĕ.

Милон. Е, ун пек йапала иккен. Мĕн кирлĕ марпа тăнна илетĕн. Мĕн каларăн есĕ ăна?

(Скотинин кĕрет).

Сухви. Пиҫҫе мĕн хупаҫ, çавăн пек пулĕ терĕм. Çыру çипе килĕп тесе çырвăҫҫĕ вăл, анҫах Скотинин çырăв вуласа пĕтерме памарĕ.

Милон. Скотинин!

Скотинин. Епĕ!

## 3-мĕш куранни.

Çавсемех тата Скотинин.

Правтин. Мĕнле-ха есĕ вăрттăн кĕтĕн, хоспотин Скотинин?

Скотинин. Епĕ ку пÿлĕм урлă иртсе кайаттăм та, хама ђĕннине илтсе ђарăнтăм. Епĕ, кам та пулин „Скотинин" тесенех ăна хирĕç „епĕ" тесе ђĕнетĕп. Епĕ квартире слушит турăм, халĕ капрал. Салтакра „Тарас Скотинин" тесенех „епĕ" тесе кăшкăрса йараттăм.

Правтин. Епир сана ђĕнмерĕмĕр-ха, ăçта кайас тенĕ, çавăнта кайма пултаратăн.

Скотинин. Епĕ нийăçта та каймастăп, ахаљ анђах шухăшласа çÿретĕп. Пĕр-пĕр шухăш пуçа кĕрсен тĕлĕкре те кăнтăрлахинех куратăп, кăнтăрла та тĕлĕкринех куратăп.

Правтин. Мĕн çинђен апла шухăшлатăн есĕ?

Скотинин. Йалан аппа çинђен шухăшласа çÿретĕп. Хăвăрт-хăвăрт мана хам йалтан сĕтĕрсе килђĕ кунта, темĕн тума, пĕлместĕп. Нимĕнсĕрех килсе, нимĕнсĕрех тухса каймалла пулаť.

Правтин. Хӗрхенетӗп сана. Санӑн аппу пӳскепе выљанӑ пек выљаҫ санпа.

Скотинин. Пӳскепе выљанӑ пек? Йепле? Вӗҫтерсе кӑларса йарсан еп ӑна, йалӗпе ерне шырасан та тупас ҫук.

Сухви. Йепле ҫиленнӗ ес ӑна?

Милон. Мӗн пулђӗ санпа апла?

Скотинин. Есӗ ак ӑслӑ ҫын, шухӑшласа пӑх-ха. Сӗтӗрсе килђӗ мана кунта аппа авлантарма. Халӗ кутӑн тапа пуҫларӗ тата: „Мӗн тума сана арӑм кирлӗ, сана сысна пулђӗ, ҫитрӗ-тет. Ҫук, аппа, халӗ епӗ хам сысна ҫурисем тӑвас, тетӗп.

Правтин. Мана хама та ҫавӑн пек туйӑнаҫ: вӑл туй тума тӑвасшӑн, анђах сан туйпа мар, урӑххине.

Скотинин. Епӗ никама та авланма ђармастӑп; кам авланас тенӗ хӑй хӗрне илтӗр. Еп ҫын хӗрне туртса илес ҫук, хамӑнне анђах ан тив.

(Сухвиге). Есӗ ан хӑра ђунӑм: сана манран никам та туртса илес ҫук.

Сухви. Ку тата мӗн!

Милон. Ак пуҫсӗр!

Скотинин. (Сухвине). Мӗнтен хӑрарӑн есӗ?

Правтин. (Милона). Мӗншӗн ҫиленетӗн-ха есӗ Скотинина?

Сухви. (Скотинина). Ђăнах та мана санăн арăм пулма турă çырнă-р мĕн?

Милон. Ђăтма халăм çитмест.

Скотинин. Турă çырнине хирĕç нырас çук, ђупăм! Санăн ху телейĕнђен пăрăнаэ пулмасť. Есĕ манпа йурласа анђах пурăнăн. 10.000 укçа. Епĕ ун ђухлĕ укçана çуралнăранпа та курман. Епĕ вăл укçапа пĕтĕм тĕнђери сыснасене илĕп, таврари çынсем ку йенђе сыснасене анђах пурăнма тейе пуçлĕç.

Правтин. Арăмна канăç сахал пулĕ, выђăх телейлĕ пулсан та.

Скотинин. Канăç сахал? Манăн пулĕм сахал-и. Кашни сыснана пӳлĕм пур, арăма пӳлĕмсĕр хăварăп-и вара.

Милон. Йепле çынна выђăхпа танлаштарať, е?

Правтин. (Скотинина). Нимĕн те пулас çук. Скотинин! Тӳррипе каласан, вăл хăй ывăлне валли илет хĕрле.

Скотинин. Йепле куккăшĕнђен туртса илесшĕн-и вăл хĕре? Тектĕр, еп ун айак пĕрђисене çемçетĕп! Сысна ывăлĕ те пулмастăп. Митрахвана ватса, çĕмĕркелесе пĕтермесен.

## 4-мӗш курӑнни.

(Ҫавсемех тата Йеремейевнапа Митрахван).

Йеремейевна. Вӗрен-ха пӑртакҫӑ.

Митрахван. Ђарӑн, ватӑ хурђӑка. Ак аннене илӗртсе парсан, ӗнерхи пек ислетӗ сана.

Скотинин. Кил-ха кунтарах!

Йеремейевна. Пыр кукку патнерех.

Митрахван. Сывӑ-и кукка? Мӗн есӗ питӗ шӑрт-на хӑпартнӑ?

Скотинин. Митрахван, пӑх мана куҫран!

Йеремейевна. Пӑх куккӑна куҫӗнђен.

Митрахван. (Йеремейевнапа). Куккана курман-и мӗн епӗ!. Мӗн курмалла ун ҫинђе?

Йеремейевна. Ан ҫилентер куккӑна. Авӑ пӑх-ха, йепле куҫӗсене ђарса пӑрахрӗ есӗ те ҫапла ђарса пӑх куҫусемпе.

(Скотининпа Митрахван пӗр-пӗрин ҫине пӑхаҫҫӗ).

Милон. Йепле калаҫаҫҫӗ!

Правтин. Мӗн пулӗ, кӗтӗр-ха!

Скотинин. Митрахван! Есӗ халӗ вилӗмрен инҫе мар кала ђӑнне. Епӗ сылӑха пӗлмен ҫын пулсан тыттӑм сана, нимӗн каламасӑрах, уraран та йара парӑттӑм кӗтесе-ле. Аййаплине пӗлмесӗрех ҫын ђунне пӗтерес килмест.

Йеремейевна. Ăçта кайса кĕрес? хĕнет ĕнтĕ ăна вăл!

Митрахван. Мĕн есĕ кукка? Тилпĕрен çирĕн-и мĕн? Епĕ нимĕн те пĕлместĕп, мĕншĕн мана хĕнесшĕн-ха есĕ?

Скотинин. Асту, тӳррипе кала, унсăрăн ђуну тухса кайни сисĕнмĕ. Асту, кăлахах хĕнеттерĕн хăна-ху.

Йеремейевна. Турă сыхлатăр кăлахах хĕнесрен.

Скотинин. Авланасшăн-и есĕ?

Митрахван. Тахçанпах ĕнтĕ кăмал туртать.

Скотинин. Е, путсĕр кăвайтă!

Правтин. Скотинин, аллусене пітех ан выђать.

Митрахван. Анне, пытăр мана.

Йеремейевна. Кирек-мĕн пулсан та ађана хĕнеме памастăп. Кил-ха, епĕ куçусене ђавса кăларăп санне.

Скотинин. Еп сире кăтартăп!

Йеремейевна. Ман хамăн та ђĕрнесем çивђĕ.

Митрахван. Кай кунтан, кукка, вĕçтер.

## 5-мĕш кӳрăнни

(Çавсемех тата Простакова)

Простакова. (Упăшкине) Кунта суймалли нимĕн те çук. Ĕмĕрне хăлхусене усса çӳретĕн.

Простакова. Вӗсем Правтинпа иккӗшӗ таҫта ҫу халҫӗҫ. Епӗ мӗн тӑвам?

Простакова. (Милона) Сана шыра-шыра тинке тухрӗ пайан. Упӑшкана пӗтӗм йал тӑрӑх шыраттӑртӑм сана лӑпкӑ салтаксемшӗн тав тума.

Милон. Мӗншӗн, тӑхлаҫӑ?

Простакова. Йепле мӗншӗн? Санӑн салтакусем питӗ лӑпкӑ: халиҫҫен пӗр йапалана та тивмерӗҫ. Каҫар ман ухмаха, сана хӑпа тума пӗлменшӗн. Ҫуралнӑранпах вӑл ман ухмах.

Милон. Епӗ кӑшт та кӳлӗшместӗп унпӑн.

Простакова. Пирӗн хӑш ҫух йупаланса кайат: тӑрат вара кусне ҫарса темисе сехет йупа цек, нимӗн ҫӗнмесӗр. Мӗн туман тӑр епӗ унпала! Нимӗнпе те иртсе каймаст. Иртсе кайрӗ, тытӑнат темӗн те пӗр пакӑлтатма..· ҫӑтаймасӑр каллех йупалантӑр тесе турра кӗл тӑван вара.

Правтин. Ҫапах та вӑл йӑваш ҫын...

Простакова. Ҫӗҫӗ ӗмекен пӑру пекех, хӑта, ҫавӑнта килте тирпей ҫук. Мӗн пур ӗҫе хам туса тӑратӑп: вӑрҫатӑп та, ҫапӑҫатӑп та, пурне те хамах тытса тӑратӑп.

Правтин. (Айккинҫе) Малашне урӑххи тытса тӑрӗ килке.

Митрахван. Пайан иртенпе аппе тарҫӑсемпе вӑрҫса иртерҫӗ.

Простакова. (Сухвине) Санăн пиҫҫӳ валли пӳлӗм хатӗрлерӗм. Ҫăтма хал ҫук курас килет ҫав старике. Питӗ ăслă, теҫҫӗ. Ҫын ун кăмăлне кайсан питӗ хытă йуратать, тет.

Правтин. Кама та пулин йуратмасан, аван мар ҫынни палла вара. (Сухвине) Епӗ пӗлетӗп санăн пиҫҫӳне. Питӗ кăмаллă ҫын. Мӗн пур йапалана тӳррипех калать.

Сухви. Ҫавăнпа пурлăхне те ӗҫлесе тупнă вăл.

Простакова. Маншăн нимӗн те кирлӗ мар, анҫах Митрахвана хăй ывăлне йуратнă пек йураттăр вăл. Сухви, кайса пăх пиҫҫӳне хатӗрленӗ пӳлӗме. (Сухви кайать. Простаков кӗрет) каллех ҫăварна карса йултăн. Ăсатса йар! Мӗн, урусем ҫӳреми пулҫӗҫ-и-мӗн?

Простаков. Ҫӳреме ҫӳреҫҫӗ те, урлă пăхкалаҫҫӗ! (Кайать)

Простакова. Пур асап та, савăнăҫ та ман Митрахван анҫах. Ӗмӗр иртет. Ҫын туса хăварасҫӗ..

(Куттейкин ҫасослăв тытнă, Ҫихвиркин пӗҫик тускапа крихвӗл тытнă, пырса кӗреҫҫӗ. Митрахван хыҫалтан йунаса пырать).

Турă пулăшсан телейлӗ те пулӗ тетӗп-ха.

Правтин. Ҫавăрăнса пăх-ха, мӗн хытланаҫҫӗ унта.

Простакова. Е, кусем Митрахвана вӗрентекенӗсем. Ҫиторыҫ Куттейкин...

Йеремейевна. Пахнуҫиҫ Ҫихвиркин.

Митрахван. Сĕтĕрĕнсе çитрĕç, Йеремейевна!

Куттейкин. Кил хуçине те, ыттисене те канăçлăх пултăр!

Ђихвиркин. Çĕр çул, çирĕм çул, тата вуппилĕк çул пурăнмалла пултăр, ваш плахороти.

Милон. Е, есĕ пирĕн пек слушивый çын иккен. Ăçтан килтĕн?

Ђихвиркин. Карнисунра пурăнтăм, халĕ шăлтах киле йађĕç.

Милон. Мĕнле тăранса пурăнатăн есĕ.

Ђихвиркин. Ыт-ахаљтен анђах, ваш плохороти! Пăртакçă арихметиккă пĕлетĕп. Ăçта килђĕ унта шутлама ђĕнеççĕ, ахаљ çăкăр çиме йуратмастăп. Пушă вăхăтра ађасене вĕренткелетĕп. Ак çак плахоротисен ађине вĕрентетĕп те, темĕншĕн ăнлансах пĕтерейместь. Çынпа çын уйрăмĕ пур çав.

Простакова. Мĕн ес, Пахнуђиђ, суйан? Илтеймерĕм, мĕн калапине.

Тихвиркин. Епĕ ак ехо плахороти хăш тункатана вунă çул та нимĕне вĕрентес çук, хăшĕ калама тытăнсанах сиеет терĕм.

Правтин. (Куттейкина). Ес, Куттейкин, вĕреннĕ çын-и?

Куттейкин. Вĕреннĕ çын, ваш плахороти! Кунти йеппархири çеминаринђе вĕренкеленĕ. Ритторикка патне

вӗренсе ҫитрӗм те, ҫеминаринҙен турӑ пилленинпе вӗҫес терӗм те, конҫисторине хут патӑм. „Ҫапла-ҫапла ҫеминарист, ҙиркӳ ҫынни, пуҫа ҫавӑракан науккӑсенҙен хӑраса ҫеминаринҙен кӑларса йама тархаслат-тесе ҫыртӑм. Ун ҫипе ак ҫапла ресолҙутси ҫырнӑҙҙӗ: „ҫапла-ҫапла ҫеминарист урапа хыҫалтан тапмасӑрах кӑларса йарӑр, мӗншӗн тесен сысна умӗнҙе турткаланма кирлӗ мар“ „тенӗ.

Простакова. Атам Атамыҙ ӑҫта тата?

Йеремейевна. Еп ун патне кӗме тытӑнтӑм та, тухса тарни сисӗнмерӗ: ҙӗлӗм тӗтӗмӗпе кӑшт анҙах вӗлермерӗ.

Куттейкин. Кирлӗ мара калаҫатӑн, Йеремейевна! Тапак туртнинҙе ҫылах ҫук.

Правтин. (Айккинҙе тӑрат). Куттейкин хвилосовине пӗлет иккен.

Куттейкин. Тӗрлӗ кӗнеке ҫинҙе ҫапла ҫырнӑ Псалтирте те „кирек-мӗнпе курӑк та ҫына пулӑшу“ тесе ҫырнӑ.

Правтин. Тата ӑҫта ҫырнӑ?

Куттейкин. Тепӗр псалтирте те ҫаплах ҫырнӑ. Пирӗн проттопопӑн пӗҙӗкҫеҫҫӗ псалтир пур, унта та ҫаплах ҫырнӑ.

Правтин. (Простакована). Епӗ сирӗн ывӑлна вӗрентнине кансӗрлеместӗп, кайам.

Милон. Епӗ те.

Простăкова. Ăçтаваскатăр эсир?

Правтин. Епĕ йулташпа хам пўлĕме кайса каласас тетĕп, курманни нумай пулаť ĕнтĕ.

Простакова. Апат ăçта çиес тетĕр, ширĕнпе йе хăв пўлĕмĕнте. Пирĕн сĕтел хушшинҫе йут çын çук, хамăр кил-йышĕ анҫах Сухвипе...

Милон. Сирĕнпе, сирĕнпе. (Тухса кайаť).

Правтин. Иксĕмĕрте çав хисепе... (Тухса кайаť).

## 6-мĕш курăнни

Çавсемех, тухса кайнисемсĕр пуçне.

Простакова. Халĕ, Митрахван, ĕлĕк вĕрентнисене вуласа пар.

Митрахван. Ĕлĕк вĕреннисене! кĕтсех тар!

Простакова. Ĕмĕр пурăн-ĕмĕр вĕрен.

Митрахван. Çапла пулмасăр! Пуçа кĕрет-и кунта вĕренни! Есĕ тата нумайрах пухмалаҫҫĕ куккасене.

Простакова. Мĕне, мĕн теттĕн?

Митрахван. Кукка хăратнă хыççăн ҫасослова тытăн. Тавта пуç. Пĕрре анҫах вилмелле.

Простакова. Мĕн тăвасшĕн есĕ? Тăна кĕр ҫунăм.

ц Митрахван. Мĕн, кунта çырма инçе мар. Ҫăм ĕ рре те, ĕç те пĕтрĕ.

Простакова. Пĕгертĕп, пĕтертĕп, ах турă...

Йеремейевна. Куккăшĕ хăратса пĕтерҫĕ. Кăшт анҫах ҫўҫĕнҫен ҫавăрса илмерĕ. Нимĕнсĕрех...

Простакова. Тата...

Йеремейевна. Ҫыпҫăнҫĕ ун ҫумне: „авланатăн-и есĕ", тет.

Простакова. Тата...

Йеремейевна. Аҫа пытармасăрах: тахҫанах кăмăл туртат, терĕ йаҫĕ. Вăл кусĕсене ҫаркаларĕ те, кăшкăрса йаҫĕ...

Простакова. Тата... Есĕ мĕн пăхса тăтăн. Мĕншĕн ҫĕрнусемпе ун патне-пуҫне ҫĕркелесе пăрахмарăн?

Йеремейевна. Тытăннăҫĕ те, анҫах...

Простакова. Тытăннă-ҫĕ. Пĕлетпĕр епир сан аҫу мар, ҫавăнпа аҫама вĕлерсен те ҫĕнес ҫук.

Йеремейевна. Ах турă, ҫырлахсам мана! Ҫав вăхăтрах шăлну пăрăнман пулсан кăтартнă пулăттăм еп ăна.

Простакова. Пурсăрта сăмахна анҫах, ҫе тума тытăнсан...

Йеремейевна. (Йĕрет). Епĕ сирĕншĕн тăрăшман-и?! Тăрăша, тăрăша мĕнле тăрăшмаллине те пĕлместĕп, хам хам хĕрхенсерер сирĕн кăмăл тăвасшăн тăрăшатăп.

Куттейкин. Пире ăҫта кайма пиллетĕр?
Ҫихвиркин. Пирĕн ăҫта утмалла, ваш плахороти. } Пĕрле.

П р о с т а к о в а. Тытăннă, ватă тухатмăш, йĕме. Кайса апатлантар çаксене, çисеп каллех кунта йертсе кил. (Митрахвана) Кайар. Митрахван. Сана енĕ хам, çумран йарас çук ĕнтĕ. Йалан вĕреву пулмĕ: турă пулăшнипе есĕ ху та аҫа ĕрҫетме шухăшла пуçларăн (Йеремейевнана) Куккăшĕпе санпа вăрçнă пек мар, хытăрах вăрçăп хаҫ (Митрахванпа кайаççĕ)

К у т т е й к и н. Санăн пурăнăç, Йеремейевна, тамăкринҫен ҫиперех мар иккен. Хуйхă пирки кайса апат умĕн пĕрерне сыпар та...

Ҫ и х в и р к и н. Унтан тепĕрне те, акă (умношени) пулҫĕ те.

Й е р е м е й е в н а. Темĕншĕн леш тĕнҫене турă мана илмест. Хĕрĕх çула йахăн пурăнатăп, ÿстерÿ çук...

К у т т е й к и н. Тупăшĕ пысак-и сан?

Й е р е м е й е в н а. Пилĕк тенкĕ çулталăкне, пиллĕк çупă кунсерен.

(Куттейкинпа Ҫихвиркин. ăна аллинҫен тытса)

Ҫ и х в и р к и н. Кайса сĕтел хушшинҫе çулталăкне мĕн ҫухлĕ тупăшне шутлар-ха.

*Ҫаршав.*

## ВИҪҪЁМЁШ ПАЙЁ.

### 1-мӗш курӑнни

Правтинпа Старотум.

Правтин. Сӗтел хушшинчен тухсанах ҫӳреҫе витӗр санӑн каретӑна куртӑм та сана хирӗҫ тухрӑм.

Старотум. Тавта пуҫ, тавта пуҫ! Епӗ кунта хамӑн йӑмӑкӑп хӗрне хӑтарма килтӗм те...

Правтин. Пӗлетӗп, пӗлетӗп.

Старотум. Анҫах тӳрех ӗҫе тытӑнас пулмаст!

Правтин. Тӗрӗс сӑмах.

### 2-мӗш курӑнни.

Ҫавсемех тата Сухви.

Сухви. (Правтина) Вӗсем шавланине тӳсме хал ҫук.

Старотум. Акӑ пиҫӗ-кусӗ йӑмӑкӑннипе пӗрех. Ку Сухви пулмалла.

Сухви. Палларӑн-и? Ах турӑ! Ҫӗрем мана уталамаст-и?

Старотум. Ҫук. Ес ман йӑмӑкӑн хӗрӗ.

Сухви. Пиҫҫе.

Старотум. Епĕ Мускавра есĕ ăçта, мĕнле çынсен аллине лекнине пĕлтĕм, çавăнпа епĕ...

Сухви. Пиҫҫе...

Старотум. Есĕ анҫах. тĕнҫере манăн çутă çăлтăр. Сана çамрăк ҫух пăхса ўстертĕм те, кайран уйăрăлмалла пулҫĕ санпа та, аннўпе те.

Сухви. Есĕ çукки пире хурлантараҫҫĕ.

Старотум. (Правтина) Çак хĕре пăртакçă пулăшас тесе епĕ Çĕпĕре укçа шырама кайрăм. Унта укçа çынна уталамасăр тупма пулаĭ.

Правтин. Есĕ пуйса килме пултарнă теççĕ.

Старотум. Пуйса! Мĕн тăвас пуйса? Çынни пуйма хапсăнма тытăнсан пĕтĕм Çĕпĕр те сахал. Епĕ тивĕçлĕ каҫҫă çук çын пулсан сана каҫҫа илме ан канçĕрлетĕр укçа çукки тесе анҫах укçа пухрăм.

Правтин. Аҫисене валли те пăртакçă кирлĕ.

Старотум. Шухăшра та пулман. Ăслă çынсем пулсан укçасăрах пурăнса иртерĕç, ухмах пулсан укçапа та пурăнас çук. (Шавлани илтĕнет) Мĕн шавлаççĕ тата.

## 3-мĕш курăнни.

Çавсемех тата Простакова, Скотинин, Милон.

Простакова. Ан ҫар, йар тетĕп. Пар-ха еп ун питне-куçне...

Милон. Йурамасť, тăхлађă, йурамасť.

Скотинин. Ђарăн, йăмăк! Хĕнеме тытăнсан айак пĕрђисене тĕпретĕп, кĕтсе анђах тăр.

Милон. Санăн шăлну-çке вăл, мантăн-и-мĕн?

Простакова. Ах турă, çапăçас килсе кайрĕ, йарха çиççе йарам.

Милон. Санăн йăмăку-çке вăл, есĕ те мантăн-и-

Скотинин. Мĕн çылăха пытармалла, пĕр тиканран.

Старотум. (Правтина) Пαçăр çиленесрен хăраса тăраттăм, халĕ ђăтма çук кулас килет.

Простакова. Кам? Камран кулма? Ес йепле çын тата?

Старотум. Каçар тархасшăн, ан çилен. Еп çуралнăранпа кун пек кулăшла йапала курманђĕ.

Скотинин. (Мăйран тытса) кама кулă, мана кулма мар ахăрса йама та вăхăт.

Милон. Амантмарĕ-и сана вăл?

Скотинин. Малтан йамарăм, хыçалтан мăйран ђĕтĕрлесе илђĕ, мур!

Правтин. Ыратмасť-и?

Скотинин. Ĕнсе пăртакçă ыраткалаť.

Простакова. Ĕнсе!.. Кăтартнă пулăттăм çак ахвитсер ђарман пулсан. Хам ывăла сыхлас тесен, хурăнташне пăхмăп.

(Старотума) Нимĕн кулмалли те çук кунта. Манăн амăш ҫ̌ĕри. Йытă хăйĕн çурисене тивме парĕ-и, е? Тытăннă кулма. Кам есĕ? Кам патне килтĕн?

С т а р о т у м. Епĕ ак çакăн патне килтĕм, унăн куккăшĕ Старотум.

П р о с т а к о в а. Йепле? Есĕ-и ха вăл? Акă ҫ̌аплă хăна çитрĕ! Ех еп путсĕр! Çапла кĕтсе илмелле̌ҫ̌ĕ-и хăнана? Каçар тархасшăн мана, ухмаха! Нийепле те тăна кĕрейместĕп! Ухмах епĕ. Упăшкам ăçта? Ывăлăм? Пурте ухмаха йерне пулмалла. Хĕрсем, Палашка! Хĕрсем!

С к о т и н и н. Çакă-и ха вăл! Куккăшĕ-и! Е-е!

## 4-мĕш курăнни

Çавсемсх тата Йсремейевна.

Й е р е м е й е в н а. Мĕн кирлĕ?

П р о с т а к о в а. Есĕ хĕр-и вара, йытă пуçĕ. Çанрап пуçне манăн урăх çын çук-и вара? Палашка ăçта?

Й е р е м е й е в н а. Ҫ̌ирленĕ вăл: иртеннех выртать.

П р о с т а к о в а. Выртать! Ак путсĕр. Выртать-е. Улпут-и мĕн вăл!

Й е р е м е й е в н а. Питĕ хĕртет пулмалла, аташса выртать.

Простакова. Аташаҫ-и ха тата. Улпут пек, е? Упăшкана ҫĕн, ывăла. Калă: турă хушнипе те Сухви кукăшĕ пирĕн пата килҫĕ те. Хăвăртрах ҫавăрăнкала.

Старотум. Мĕншĕн ҫав тĕрлĕ хыпаланатăр-ха эсир? Турă хушнипе-и епĕ сирĕн пĕлĕш те мар-ха.

Простакова. Сасартăк есĕ персе ҫитни мана ухмахлантарҫĕ пулмалла; кӳр-ха ҫуп-туса илем сана, тăванăм!..

## 5-мĕш курăнни.

Ҫавсемех тата-Простаков, Митрахван, Йеремейевна.

Старотум. Ку кирлĕ те мар-ҫĕ, тăхлаҫă! (Скотинина) Ку кам тата?

Скотинин. Еп йăмăкăн шăлнĕ.

Старотум. Есĕ тата кам?

Простаков. Епĕ арăмăн упăшки } харăс
Митрахван. Епĕ аннен ывăлĕ }

Милон. Епĕ халĕ паллашас та мар тетĕп.

Правтин. Кайран сăлтав тупăп сана паллаштарма.

Старотум. (Аллине памасăр) Ку алла ҫуп-тăвасшăн тата. Мĕншĕн-ха апла?

Простакова. Кала, Митрахван, йепле ђуп-тăвас мар те Есĕ ман иккĕмĕш атте те.

Митрахван. Йепле сан аллуна ђуп тăвас мар, кукка! Есĕ манăн атте... Миçемĕшђĕ-ха?

Простакова. Иккĕмĕш.

Митрахван. Иккĕмĕш? Вара, иккĕмĕш атте, кукка!

Старотум. Еп сан аçу та мар, кукку та мар.

Простакова. Ађа çке. Темĕн хăйĕп телейне те сисет пулĕ, тата. Кĕрӳ пуласса сисрĕ пулĕ...

Скотинин. Тупрĕ! Епĕ мĕнтен кĕрӳ мар? Е?

Простакова. Санпа шăлнăм вăрçма вăхăт çук. (Старотума) Çуралнăранпа никампа вăрçса курман. Манăн йăла çапла! Кирек мĕнле вăрçсан та сăмах ђĕнес çук. Турă пĕлет мĕн тумаллине, мана, мĕскĕне хур тусан.

Старотум. Есĕ алăкран кĕрсенех сисрĕм мĕнле çыннине.

Правтин. Вăл ырă кăмăллине виçĕ кун сиссе пурăнатăп ĕнтĕ.

Старотум. Кун пек иртĕннине нумайђђен ђăтма хал çитеймĕ. Ыранах ирпеле Мускава тухса кайăпăр санпа Сухви.

Простакова. Ах, турă! Мĕншĕн çилентĕн-ха капла?

Простаков. Мĕншĕн-ха?

Простакова. Йепле? Йепле Сухвине уйăрăлас-ха ман? Хуйхăрнипе çăкăр çиме те пăрахăп тата.

Простаков. Епĕ пĕтрĕм кунтах, çухалтăм.

Старотум. Есĕ питех йуратататăн пулсан Сухвине, сана мĕншĕн ăна Мускава илсе кайпине каласа парам: ăна валли унта тивĕçлĕ каҕҕă пур, çавна каҕҕа парас тетĕп.

Простакова. Ах, пĕтерҕĕ.
Милон. Мĕн илтетĕп епĕ.
Скотинин. Вĕçрĕ арăм!
Митрахван. Акă сана!

(Харăс.)

Старотум. Мĕн есир? (Сухвине) Сухви, есĕ те хăраса ӳкмерĕн-и вара? Ап хăра, санăн упăшку пуласси аван çын, çапах та кама кайас тенĕ çавна кай.

Сухви. Ан шиклен, сана, хирĕç çук епĕ.

Милон. Ак çын та ку!

Простакова. Ак кама илесе пурăнмалла. Кирек кама кай каҕҕа, анҕах каҕҕи хĕрне тивĕçлĕ пултăр. Çапла, тăванăм! Анҕах тивĕçлĕ каҕă тĕл пулсан аларан вĕçерес пулмасť. Çамрăк творенин тупăнсан...

Скотинин. Çамрăк çынах мар ĕнтĕ епĕ...

Простакова. Пăртакçă пурлăхĕ пулсан...

Скотинин. Сыена кĕтĕвĕпех пулсан каҕҕин...

Простакова. Йара пар арханкĕл ҕиркӳне.

Скотинин. Туйа вĕçтере пар.

Старотум. Есир кайри шухӑшсӑрах калаҫатӑр, курӑнат.

Скотинин. Ҫавна анҫах курӑн-и-ха, манпа лайӑхрах паллашсан. Халӗ кунта халӑх нумай, пӗр сехетрен килӗп еп пӗҫҫепех вара ӗҫе майлӑпӑр. Тӳррипех каласна ман пек ҫын тӗнҫере сахал. (Кайат)

Старотум. Ҫапла пулӗ гетӗп ҫав.

Простакова. Тӗлӗнмеллийех ҫук ман шӑллӑмран.

Старотум. Санӑн шӑлну-и вӑл?

Простакова. Вара, епӗ Скотинин йӑхӗ-ҫке. Ман атте ман аннене каҫҫа илнӗ; аннен хушамаҫӗ Приплотин. Аҫа-пӑҫа вӗсен вунсаккӑр пулнӑ, анҫах пурте, пӑлвӑмпа икӗсӗмӗртен пуҫне, турӑ хушнипе урисене тӑсрӗҫ: хӑшне мунҫаран вилнисене турта-турта кӑларҫӗҫ, виҫҫӗшӗ пӑхӑр тиркӗрен сӗг ҫисе вилҫӗҫ, иккӗшӗ мункун ерпи хушшинҫе ҫиркӳ ҫинҫен, ҫан ҫапакан ҫӗртен ӳксе вилҫӗҫ, ыттисем хӑйсем пурӑнаймарӗҫ.

Старотум. Курӑнат, ашшӗ-амӑшӗ мӗнли.

Простакова. Авалхи ҫынсем-ҫӗ! Самани те халҫхи мар-ҫӗ. Пире нимӗне те вӗрентмен. Кам та пулин шӑлнӑма вӗрентме йар тесе ыйтсан, аллипе те, урипе те суллайаҫҫӗ. Пассурмансен аллине вӗренме парӑп-и. Скотинин та пулмас вӑл мӗне те пулин вӗренсен тетҫӗ.

Правтин. Есӗ ҫапах та ывӑлна вӗрентеп-ҫке?

Простакова. Халĕ урăх самана. (Старотума) ывăла вĕрентес тесе нимĕне те хăрхенместпĕр. Кунĕ-çĕрĕ кĕнекепе ларать Митрахван. Хĕрхенетĕп те хăйне, мĕн тăвас, ÿссен çын пулĕ тетĕп. Вунултă тултарать хĕллехи Микулара. Аван каҫҫă ÿсет. Халĕ те икĕ вĕрентекенĕ пăлтăрта кĕтсе тăраççĕ. Мускавра йут патшалăхри çынна вĕрентме кĕршсе илсе килтĕмĕр. Мĕне вĕрентес тенĕ çавна вĕрентме пулҫĕ. Пирĕншĕн пулсан кирек-мĕне вĕренттĕр. Нимĕçе тытрăмăр, укçине çулталăкне виçĕ хут малтан тÿлесе тăратпăр. Есĕ хăв пăхса тăр-ха, Митрахван мĕне вĕреннине.

Старотум. Епĕ вăл йĕркене пĕлсех пĕтерейместĕп.

Простакова. (Куттейкинпа Ҫихвиркин кĕроççĕ) Ака вĕрентекенсем те çитрĕç. Калатăп Митрахван кунĕ-çĕрĕ канăç курмас тесе. Хам аҫана мухтама аван та мар пек те, анҫах арăм пуласси телейлĕ пулĕ.

Правтин. Çаплипе çапла та, анҫах хăну Мускавран хаҫ анҫах килнĕ, ăна канăç кирлĕ, çавăнпа ывăлна мухтиҫҫен...

Простакова. Ах турă, пурте хатĕр! Пÿлĕмне те хам тирпейлесе хутăм.

Старотум. Тавта пуç. Сухви, ăсатса йар-ха мана

Простакова. Епир мĕн? Мана та, ывăлна та, упăшкана та, ăсатса йама пар хăна. Ĕçе майа кÿрсен, пурсăмăр та сантан кĕл тума Кийÿве çуран кайса килĕпĕр.

С т а р о т у м. (Правтина) Хăçан курăнăр пĕр-пĕрне епир? Пăртак кансан килĕп еп кунта.

П р а в т и н. Йурĕ.

С т а р о т у м. Ђунтан хавăс сана курма. (Милона тайăлат).

П р о с т а к о в а. Пурте килĕр... (Кайат)

### 6-мĕш курăнни.

К у т т е й к и н п а Ђ и х в и р к и н.

К у т т е й к и н. Мĕн шуйттан! Иртеннех нимĕн йĕркине те тупаймастпăр. Кунсерен пĕр пекех.

Ђ и х в и р к и н. Пирĕн ĕмĕрех çакăн пек пурăнăç. Ĕçне те ан тăв, ĕçрен те ан тар. Нађар çитерсен пайанхи пек пурăнăç тата нађарланат провиант çуккипе.

К у т т е й к и н. Çўлти атте хушнипе çула май просвирђа патне кĕрсе çырткаламан пулсан, çўрĕттĕм йытă пек ђĕлхене кăларса.

Ђ и х в и р к и н. Кунти улпутсем ырă çынсем.

К у т т е й к и н. Курман-и мĕн есĕ кунти тарçăсем мĕнле пурăннине? Курнă епĕ курkалама, анђах кунти пурăнăçа аса илсен, çўçсем вирĕлле тăраççĕ.

Ђ и х в и р к и н. Ак тата курман и? Кунсерен кил тăрăх виçĕ сехет хушши вут выђанат. (Йывăрăн сывласа) Ой-ой-ой. Хуйхăрас килет.

Куттейкин. Хуйхă мана çылăхлăскере!

Ђихвиркин. Мĕн ахлатан?

Куттейкин. Санăн та ђĕрў пăлхана пуçламарĕ-и, Пахнутыђ?

Ђихвиркин. Ирĕксĕрех пăлханĕ! Пађĕ мана турă улпут ывалĕ: виçĕ çул вĕрентетĕп, виççе çитиђђен шутлама пĕлмест.

Куттейкин. Пирĕн иксĕмĕрĕн те пĕр хуйхă. Тăватă çул муталанатăп нийсппе те малалла кайаймасť. Кĕйрисене те аран-аран вилеймен ђавка пек, картлатарталаса анђах ларать.

Ђихвиркин. Кам айăпла? Крихвилне алла илнĕ-илменех нимĕç персе çитет те мана ђĕркуççипе хыçалтан...

Куттейкин. Ман çылăх-и кунта? Пўрнепе кĕнеке тăрăх кăгартма тытăннă-тытăнманах леш, пассурман вĕççе килет те, мана ĕнсерен персе кăлараççĕ.

Ђихвиркин. Мана кирек-мĕн туђђăр, анђах çав нимĕçе салтакла ăсатса йарасђĕ.

Куттейкин. Мана урапа туртипе ватсан та нимĕн те марђĕ, анђах çав çылăхлă шуйттана ĕнселесе йарасђĕ.

## 7-мĕш куранни.

Çавсемех тата Простакова Митрахван.

Простакова. Вăл каннă вăхăтра пăртакçă йăлашăн вĕренкеле-ха, Митрахван ђувăм! Унăн хăлхине кĕтĕр есĕ тăрăшни.

Митрахван. Малашне мĕн?

Простакова. Малалла авланăн.

Митрахван. Итле, анне! Епĕ вĕренме вĕренĕп те, йулашки хут пултăр. Пайанах килĕшес пулаћ хĕре.

Простакова. Вăхăт çитĕ-ха турă парсан!..

Митрахван. Манăн вăхăт çитрĕ. Вĕренес килмест, авланас килет. Хавăх елеклерĕн, хăвах айăплă. Акă лартăм.

Простакова. Епĕ те сан çумнах ларам. Сэна валли Сухви укçине ђикмешкĕн хутаç çыхам.

Митрахван. Ну, пар тускуна, карнисупри йĕкехўре. Мĕн çырмалла.

Ђихвиркин. Йалан ес, ваш плахороти, нимĕнсĕрех вăрçатăн.

Простакова. Ах турă! Ађа вăрçма та пултараймасћ-и Пахнутыђа. Çиленђĕ те.

Ђихвиркин. Мĕншĕн çиленмелле? Ваттисем йытă вĕрет, çил вĕçтерет, тенĕ.

Митрахван. Пар ӗлӗк вӗреннисене, ҫаврӑнкала.

Ҫихвиркин. Йалан кайрисене те, кайрисене, ваш плахороти. Кайрисемпе ӗмӗрнех кайа йулӑн.

Простакова. Сан ӗҫ мар вӑл, Пахнутыҫ. Митрахван малалла утма йуратманнипе питӗ хавас епӗ. Унӑн асапӗ малалла васкама, турӑ сыхлатӑр!

Ҫихвиркин. Сатаҫҫӑ. Ҫалӑнӑр иксӗмӗр епир ҫула тухса кайрӑмӑр. Илер хамӑрпа пӗрле Ситорҫа. Тупрӑмӑр епир виҫҫӗмӗр...

Митрахван. Виҫҫӗ.

Ҫихвиркин. Ҫул ҫинҫе виҫҫӗр тенкӗ.

Митрахван. Виҫҫӗр.

Ҫихвиркин. Тытӑпӑпӑр уйӑрма. Шутла-ха, миҫешер тенкӗ ҫын пуҫне тивет?

Митрахван. Виҫҫе пӗр хут илсен-виҫҫӗ, пӗррене нуме ӳстерсен-пуме, пӗррене ӳстерсен пуме.

Простакова. Мӗн-мӗн? Уйӑрмалла-и?

Митрахван. Вара. Виҫҫӗр тенкӗ укҫа тупнӑ, ҫавна виҫӗ ҫынна уйӑрмалла.

Простакова. Суйат вӑл, суйат, ҫунӑм. Укҫа тупсан никампа та ан уйӑр. Пурне те хӑв ил. Пӑрах ҫав ухмах науккӑпа.

Митрахван. Илтетне, Пахнутыҫ. Пар урӑххине.

Ҫихвиркин. Ҫыр, ваш плахороти. Сана вӗрентнӗшӗн ҫулталӑкне вунӑ тенкӗ тӳлетӗр.

Митрахван. Вуннӑ.

Ҫихвиркин. Халӗ ӳстермешкӗн кирлех мар пек те, анҫах есӗ мӗн те пулин вӗренсен тата вунӑ тенкӗ ӳстерсен пырат.

Митрахван. Вуннӑ.

Ҫихвиркин. Ҫулталанкпе миҫе тенкӗ пулат?

Митрахван. Нулҫпе нулҫ-пулҫ, пӗрре ҫумне пӗрре. (Шухӑша кайса ларат.)

Простакова. Ан та шутла кирлӗ мара, пӗр пуста ӳстерместпӗр. Наукки те сана асап анҫах, нимӗн усси те ҫук. Укҫа ҫуктӑк-шутлама та кирлӗ мар, укҫа пулсан Пахнуҫитсӑр пуҫне те шутлӑпӑр.

Куттейкин. Шалт икӗ сатаҫҫӑ турӑр, ҫитрӗ те. Пахнутыҫ! Ҫӗнӗрен пӑхса тухтармӗҫ пулӗ!

Митрахван. Ан хӑра, анне хӑй те атащса каймӗ. Кай-ха есӗ. Куттейкин, вула ха ӗнерхине.

Куттейкин. Тытӑнар вулама. Ман хыҫрап йерепен, лӑппӑн: „Епӗ ҫӗр айӗнҫи пӑван“.

Митрахван. „Епӗ ҫӗр айӗнҫи пӑван“.

Куттейкин. „Пӑван“ урӑхла каласан вылҫӑх. Епӗ вылҫӑх.

Митрахван. Епӗ вылҫӑх.

Куттейкин. „Ҫын мар“.

Митрахван. „Ҫын мар“

Куттейкин. „Ҫын кулӑҫӗ анҫах“.

Митрахван. „Çын кулăçĕ анђах“.

Куттейкин. „Тата..

## 8-мĕш куранни.

Çавсемех тата Враљман.

Враљман. Ай-ай-ай-ай-ай! Халĕ куратăп! Ађана вĕлерет вĕрентсе. Тăхлађă шĕлет ту ху тăхăр уйăхри ађуна, çĕклесе çӳренĕ хырăмна. Пар-хъ çак усал вăр-хурахсене ирĕк, вĕсем ку пуçран калăп туса хурĕç

Простакова. Ђăнах, ђăпах Атам Атамовиђ! Санăн пуçна вĕренни пăсаĭ пулсан, пăрах тархасшĕн вĕренме.

Митрахван. Маншăн пулсан такçанах пăрахма кирлĕ-ђђĕ.

Куттейкин. Пĕтрĕ, тав турра!

Враљман. Мĕн ес ађу-пђу Аристоттеђ пек ăслă пултăр та, тупăка вырттăр тесе шухăшлатăн-с?

Простакова. Ах, турă сыхлатăр ун пеккинђен!

Враљман. Мĕн Раççейри твоŗенин вĕренмесĕр пурăнаймасĭ-и вара?

Куттейкин. Ах ђĕлхуна çăтасшĕ!

Враљман. Арихметтиккăна вĕренмесеђ çын ухмах пулаĭ-и мĕн? .

Ђихвиркин. Тĕк тăр! Еп сан айак пĕрђисене шутлăп, лекĕн ха ман алла!..

В р а ђ м а н. Ай-ай-ай! Йепле ҫитернĕ ăйăр пек тапăртатса тăрат.

П р о с т а к о в а. Аҕан „авланма вăхăт ҫитлĕ. Кайса пăхас ха, хăнана ан кӳрентертĕр вăл.

В р а ђ м а н. Кай, тăхлаҕă! Ун куҫĕсенҕен пăхас пулат.

П р о с т а к о в а. Сывă пул Атам Атамовиҕ! (Тухса кайат.)

## 9-мĕш курăнни.

Врађман, Куттейкин тата Ҕихвиркин.

Ҕ и х в и р к и н. Ак кĕҫҫе пит!

К у т т е й к и н. Тамăкран тухнă йапала!

В р а ђ м а н. Мĕн есир, ухмахсем, кулатăр!?

Ҕ и х в и р к и н. (Хул пуҫҫи ҫинҕен ҫапса). Мĕн есĕ куҫ харшисене пĕретĕн, нимĕҫ ҫерҫи!

В р а ђ м а н. Ай-ай-ай! Аллисем хурăҫ пек!

К у т т е й к и н. (Хул пуҫҫи ҫинҕен ҫапса). Тăмана! Мĕн куҫусемпе супкаласа тăратăн?

В р а ђ м а н. Пĕтрĕм епĕ! есир ман ҫумма ҫыпҫăнтăр?

Ҕ и х в и р к и н. Ху пимĕн ĕҫлемесĕр ҫăкăр ҫийетĕн, пире те ĕҫлеме памастăн. Ҫитменнине ҫăварна каратăн.

Куттейкин. Санӑн ђӗлхӳ йалан ҫылӑхлӑ сӑмахсем калать.

Враљман. Мӗн вӗреннӗ ҫынтан кулатӑр эсир, эпӗ кравул кӑшкӑратӑп!

Ђихвиркин. Парӑп сана кӑшкӑрма тунката!...

Куттейкин. Епӗ ђасословпа пуҫрав!

Враљман. Епӗ улпут арӑмне елеклесе парӑп. (Ђихвиркин крихвӗлпе ҫырмалли туска, Куттейкин ђасослов тытса тӑраҫҫӗ).

Ђихвиркин. Питна-куҫна пилӗк пайа уйӑрӑп!

Куттейкин. Путсӗр шӑлусене тӗпретӗп!

(Враљман урнӑ пек тӑрать).

Ђихвиркин. Е, таратни, хӑравҫӑ!

Враљман. Мӗн! Тытрӑр-и? Кил-ха кунта.

Ђихвиркин. Тарма ӗлкӗртӗп, ату кӑтартаттӑмӑр сана Мускав!

Враљман. Хӑрамастӑп халӗ, хӑрамастӑп.

Куттейкин. Нумай-и унта сан пек пӑссурмансем? Пурпе те йар кунта.

Враљман. Пӗринпе те нимӗн тӑваймарӑр.

Ђихвиркин. Пӗђђенех вуниккӗшне хурӑп!

Куттейкин. Пӗтӗм ҫылӑхлӑ тӗнђепе, леш тӗнђепе йарӑп.

*Ђаршав.*

## 4-МЁШ ПАЙЁ.

### 1-мёш куранни.

Сухви. Пиђђе халех килет пулě. (Вулат) Епě кěтем-ха ăна çакăнта. Ман пиђђе пек çын сахал тěнђере (Вулат)

### 2-мёш куранни

Старотум. Есě кунта иккен, савнă йăмăкăм!

Сухви. Сана кěтетěп, пиђђе! Кěнеке вуларăм.

Старотум. Мěнле кěнеке?

Сухви. Хравтсусла. Хенелона вуларăм.

Старотум. Хенелона! Телемакка çырнă çын кěнекине—пит аван çырат, теççě, вуласса вуламан та.

### 3-мёш куранни.

Çавсемех тата камертинер.

Старотум. Ăçтан ку çыру?

Камертинер. Мускавран илсе килђěç. (Кайат)

Старотум. Крахв Ђестин çырат иккен! Е. Сухви, муçлăха илсе кил-ха!

Сухви. Халех! (Кайат)

## 4-мӗш курӑнни.

Старотум. Вӑл хӗр килӗшесси ҫинҫен ҫырат пулӗ ге, анҫах Милона пӗлместӗп. Крахв ӑслӑ ҫын, наҫар ҫыннах тупса памӗ. Сухви кама та пулин йуратман пулсан...

## 5-мӗш курӑнни.

Сухви. Тупрӑм, пиҫҫе.

Старотум. (Вулат) Епӗ халӗ анҫах пӗлтӗм... Вӑл салтаксене Мускава илсе килме кайнине. Сана вӑл тӗл пулмалла пек туйӑнат... Ҫавӑнпа... тӗл пулсан унта калаҫса пӑх та... Пӑхмасӑрах хӗре парас ҫук... Кӑмӑла кайсан... Санӑн тусу.. Сана каҫҫа илесси ҫинҫен ҫырасҫӗ ку ҫырура. Пасӑрах калаҫрӑм ҫав каҫӑ ҫинҫен. Есӗ кама та пулин йу...

Сухви. Мӗн пиҫҫе, епӗ сана хирӗҫ...

## 6-мӗш курӑнни

Правтин. Акӑ сана паллаштарам хамӑн савнӑ туспа, Милон.

Старотум. Милон!

Милон. Епӗ питӗ хавас сан кӑмӑлна каймалла ҫын пулма пултарсан.

Старотум. Крахв Ҫестин санӑн хурӑнташ мар-и?

Милон. Мав аттепе пӗр тӑван вӑл.

Старотум. Питӗ хавас сан пек ҫынпа паллашма. Сан ҫинҫен питҫу нумай каларӗ мана. Питӗ сана мухтаҫ.

Милон. Ҫамрӑк ҫынна ваттисем мухтанине пурте вырӑнна хумасан аван та мар та, ҫапах та есӗ...

Правтин. Есӗ манӑн тусӑ та лайӑхрах паллашсан, наҫар ҫын маррине курӑн-ха. Вӑл сан йӑмӑку патне пыр калаҫ-ҫӗ...

Сухвн. (Старотума) Авне ӑна ывӑлне йуратвӑ пек йуратаҫ-ҫӗ...

Старотум. (Сухвине) Питӗ хавас ӑна епӗ. (Милона) Есӗ вӑрҫӑра та пулнӑ теҫҫӗ Питӗ маттур вӑрҫнӑ теҫҫӗ. Хӑравҫӑ ҫын мар теҫҫӗ сана.

Милон. Ытисенҫен ытлах мар-ҫке. Хӑравҫӑ ҫын маррине кӑтартма телей те пулман-ха мана.

Старотум. Ҫапах та хастар ҫын теҫҫӗ сана.

Милон. Ҫӑтаймастӑп. Калам ӗнтӗ! Епир Сухвине пӗр-пӗрне йурататпӑр, ҫавӑнпа есӗ пире телей пама пултаратӑн.

Старотум. Йепле? Епӗ сӑнанӑ ҫынпах есӗ йуратнатӑн иккӗн Акӑ сан упӑшку пуласси.

Сухвн. Йурататӑп еп ӑна, питҫе!

Старотум. Телейлӗ пулӑр!

Сухвн. Манран телейлӗ ҫын тупас та ҫук ӗнтӗ.

Милон. Кунтан пысӑк телей те ҫук.

Правтин. Питĕ хавас сирĕншĕн.

Старотум. Манран хавас çын та çук тăр халĕ.

Милон. (Сухви аллине ҫуп туса) Акă пирĕн телей пуçланҫĕ.

Сухви. Сана епĕ ĕмĕрех йуратса пурăнăп.

## 7-мĕш курăнни.

Çавсемех тата Скотинин.

Скотинин. Епĕ те персе çитрĕм!

Старотум. Мĕн тума килтĕн?

Скотинин. Хам ĕççе.

Старотум. Мĕнпе пулăшма пултарап сана?

Скотинин. Икĕ сăмахпа.

Старотум. Мĕнле сăмахсемпе?

Скотинин. Ыталаса ҫуп-ту та, Сухви санăн те.

Старотум. Кирлĕ мара пуçламастăн-и? Пухăшла-ха!

Скотинин. Епĕ нихăçан та малтан шухăшласа калаçмастăп. Малтанах калатăп: есĕ те ыталашни шухăшламастăн пулсан — Сухви манăн.

Старотум. Есĕ, пăхсан, ухмах çын мар та, анҫах нимĕп пĕлмен çынна йеппе парам-ха епĕ йăмăка?

Скотинин. Пĕлместĕн пулсан пĕлĕп. Епĕ авалхи йăхрк çын Тарас Скотинин!

Правтин. Сирён йăх Атмаран та малта пулĕ апла?

Скотинин. Мĕн шухăшлатăн есĕ? Нумайах мар çав...

Старотум. Анҫах сан мăн аслаçу асаннӳсем Атамран маларах çуралнă епшин?

Скотинин. Çук! Ҫăнах? Апла епшин есĕ ман йăх çинҫен усал калаçмастăн пулат?

Старотум. Йурат-и вара? Анҫах есĕ Скотинин йăхĕнҫенех арăмна та ил.

Скотинин. Шухăшла-ха, Сухвине мана каҫҫа пыма аван мар-и вара. Вăл творенккă...

Старотум. Акă çын! Çавăнпа та вăл сана арăм мар.

Скотинин. Епĕ хăрамастăп. Калаҫҫĕр Скотинин творенкка каҫҫа илнĕ тесе. Мана пурĕ пĕр.

Старотум. Сана пурĕ пĕр те, ăна пурĕ пĕр мар. Творенккă Скотинина каҫҫа кайнă тейĕç.

Милон. Кун пĕк авланни иксĕре те телей мар вăл.

Скотинин. Е, ку мĕн çыпçăнат тата? (Старотума). Туртса илесшĕн мар-и вăл?

Старотум. Çапла пулĕ тетĕп.

Скотинин. Ăçта пыма ун!

Старотум. Капçĕртерех!

Скотинин. Кам пирген иксĕмĕртен кулăшла çын? Ха-ха-ха-ха!

Старотум. Куратăн камне!

Сухви. Пиҫҫе, савăнатăп есĕ кулнăшăн.

Скотинин. Е! Есĕ кулăшла çын иккен. Паçăр сан патна пыма та харушă пĕк туйăнаҫҫĕ. Мана пĕр сăмах та каламарăп, халĕ кулатăп та ĕнтĕ манран.

Старотум. Çынни çавăн пек, тусăм!

Скотинин. Курăнат мĕнли. Паçăр та епĕ çак Скотининах-ҫĕ-çке, есĕ çиленеттĕн мана.

Старотум. Сăлтавĕ пурҫĕ.

Скотинин. Епĕ пĕлетĕп мĕншĕнне. Епĕ хам та çавăн пек çын. Килте сысна витине кĕрсен, сыснасем ҫипер пулмасан, кăмăл хуçăлат. Есĕ те килсен йăмăк çуртне çысна вити пеккине кура — çилентĕн пулĕ.

Старотум. Есĕ телейлĕ. Мана çынсем çилентерçҫĕ.

Скотинин. Мана сыснасем.

## 8-мĕш курăнни.

Çавсемех тата Простакова, Простаков, Митрахван, Йеремейевна.

Простакова. Мĕн кирлине пурне те илтĕн-и?

Митрахван. Илнĕ, манра ĕç ҫарăнса тăмаст.

Простакова. (Старотума). Аван кантăн-и, хăта? Сана лăпкă пултăр тесе тĕрне вĕççĕн çÿрерĕмĕр. Алăкран пăхма хаймастпăр вăратас мар тесе, есĕ тахçанах кунта иккен. Каçар тархасшăн...

Старотум. Есир кунта маларах килпĕ пулсан аванах та пулман пулĕççĕ.

Скотинин. Есĕ, аппа, йалан ман хыççăн сĕтĕрĕнсе çÿретĕн. Епĕ хамăн ĕçпе килтĕм кунта, есĕ...

Простакова. Епĕ те хамăн ĕçпе. (Старотума). Епир санран пĕр йапала ыйтаспăнççĕ те. (Упăшкипе ывăлне). Пуç-çапăр.

Старотум. Мĕн ыйтас тетĕр?

Простакова. Пурте ларăр малтан. (Пурте ларасçĕ, Простаков, Митрахван, Йеремейевна). Акă мĕн, хăта мана турă Милтрахвана савса паçĕ. Епир ăна тăрăшса ÿстертĕмĕр, хăвăр куратăр мĕнлине. Курас теместĕр-и вăл ирĕн мĕне вĕреннипе?

Старотум. Ман хăлхана кĕçĕ ĕнтĕ вăл мĕнле вĕренни Куттейкин вулача вĕрентсен, Çиувиркин маттематтикăна—палла мĕне вĕренесси витĕрех (Правтина) Анçах имĕç мĕне вĕрентнине илтесçĕ тата? Мĕне вĕрентнĕ-ши вăл?

| | |
|---|---|
| Простакова. Мĕн цур паукăна, хăта.<br>Простаков. Пурне те.<br>Митрахван. Мĕне кирлĕ, цурне те. | Харăс. |

Правтин. Мĕне, сăмахран каласан?

Митрахван. (Кĕнекисем ўкеççĕ) Акă краматтикăна.

Правтин. Куратăп. Кĕнеки краматтикă. Мĕн нĕлетĕн есĕ унтан?

Митрахван. Нумай нĕлетĕп. Сушществиттĕлни, прилакатĕлни.

Правтин. Алăк? Сушществитĕлни, йе прилакатĕлни?

Митрахван. Хăш алăк?

Правтин. Хăш алăк? Ак çак алăк?

Митрахван. Ку алăк прилакатĕлни.

Правтин. Мĕншĕн?

Митрахван. Мĕншĕн тесен ăна алăк йапаххи çумне çыпăçтарса хунă, лешĕ нăлтăрта выртаканни прилакатĕлни.

Правтин. Сан шухăшпа ухмах прилакатĕлни пулаť-и, мĕншĕн тесен ăна ухмах çын çумне çыпăçтарса хураççĕ.

Митрахван. Е-хе!

Простакова. Мĕнле, тăванăм?

Простаков. Аван пĕлет-и?

Правтин. Калăма та çук маттур краматтикăна тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлет.

Милон. Историне те унтан naĵар пĕлмест пулĕ вăл.

Простакова. Вăл çамрăкранпах историне итлеме йуратаť.

Скотинин. Митрахван мана хунӑ. Епӗ хам та исторāне итлеме йуратататӑп. Ман пӗр йулташ историсем пит маттур каласа парат. Таҫтан шухӑшласа кӑларат, мур.

Простакова. Анҭах Атам Атамҭа хирӗҫ пыма вӑл тӗлӗшӗнҭен хӗн.

Правтин. Историне инҫе кайрӑр-и есир?

Митрахван. Инҫе? Мӗнле истори пулат. Хӑшӗнҭе темиҫе пин ҫул кайса ӳкен, хӑш ҭух темиҫе ҫӗр пин...

Правтин. Ҫапла историне вӗрентет-и сана Враҭман.

Старотум. Враҭман? Илтеленӗ епӗ кун пек хушамата.

Митрахван. Атам Атамыҭ историсем калама йуратсах каймаст, вӑл, ман пек, итлеме йуратат.

Простакова. Вӗсем иккӗшӗ те епӗ савакан карҭӑка Хавронине историсем калаттараҫҫӗ.

Правтин. Кеокрахвийе те Хаврони вӗрентмерӗ-и сана.

Простакова. Итле, мӗн тет. Мӗнле наукӑ вӑл?

Митрахван. Еп ӑҫтан пӗлем.

Простакова. Ан кутӑнланса тӑр, ҭунӑм. Халӗ сан мӗне вӗреннине пурне те кӑтартас пулат.

Митрахван. Мӗн ҫинҭен ыйтнине пӗлместӗп епӗ.

Простакова. Мӗнле наукӑ терӗн-ха есӗ?

Правтин. Кеокрахви.

Простакова. Илтетне, йеоркахви.

Митрахван. Мĕн вăл? Çынçăнтăр ман çумма ўпре пек.

Простакова. Каласа пар малтан мĕн çинђен вĕрентекен наукка вăл, унтап каласа парĕ вăл.

Правтин. Çĕр çинђен.

Простакова. (Хăвăртăн) Мĕне кирлĕ йапала-ха вăл?

Старотум. Тўрех каласан ăçта та пулин çула кайас пулсан, ăçта кайассине пĕлетĕн.

Простакова. Ес! Исвошђăк мĕншĕн тата? Вăл вĕсен ĕçĕ. Твореникпа каласси пултăр, исвошђăкăн тупма кирлĕ. Ђăнне каласан, Митрахван пĕлмен наукка, кирлĕ мар йапала вăл.

Старотум. Çавă, çав! Пур тĕнђере çынсем; мĕне пĕлмест, çавна кирлĕ мар йапала теççĕ вĕсем.

Простакова. Науккăсăрах çынсем пурăнаççĕ. Акă ман атте 15 çул çар пуçлăхĕ пулса пурăнђĕ, вулама та пĕлмен, çапах та пурлăх пухнă. Пĕр йапала ыйтма килекен çынсемпе йалан укçа арђи çинђе ларса калаçатђĕ. Тухса кайсанах мĕн те пулин арђине ђикетехђĕ. Хăйĕн пурăнăçне хĕрхенмесђĕ, арђинђен укçине кăларас мар тесе. Ыттисене калас та çук та, сире калам ĕнтĕ. Вилме те выççăпах вилђĕ укçа арђи çинђе выртса. Мĕнле? Е?

Старотум. Ђăнах та Скотининах пулмалла çапла ђаплă вилĕме тивĕçлĕ пулас тесен.

Скотинин. Каласмъ тытăнвă тăк калассах пĕтерер. Ђăннипе каласан, вĕреннинђе нимĕн усси те çук. Акă ман куккана илер, Вавилă Ханеленђа. Вулама пĕлме мар, вуласси мĕнне те пĕлмен. Çапах та йепле-ђђĕ пуçĕ!

Правтин. Мĕн апла?

Скотинин. Ак мĕн пулђĕ ун ĕмĕрĕнђе. Пĕрре йуланутпа вĕçтерсе килет вăл киле. Хĕрĕнкĕрех пулнă пулмалла. Ђул хăпха айĕнђен тухса каймалла пулнă. Хытă пынă ђух ўсĕрпе пуçне пĕшкĕртме ас та туман. Ђул хапхана пуçĕпе шаклаттара панă. Мĕн шухăшла ăр? Ирхине урăлсан хапха ђилай-и? тесе ыйтат, тет. Пулнă-и тĕнђере тата çавăн пек пуç, е?

Милон. Есĕ, Скотинин, хăвах вĕренмен çын тен хăна, анђах сан пуçу тўсме пултарĕ-и çавăн пек хапхана перĕнсен.

Старотум. (Милона) Ан тавлаш унпа! Скотининсен пурин те çамкисем тĕреклĕ пулмалла.

Простакова. Вĕреннинђе мĕн усси пур. Хамăр хушăртах, ăçта та пулин суйласа партĕç тата.

Старотум. Ăелăрăххи хăйĕн çыннисене пулăшассинђен тарас çук.

Простакова. Темĕнле шухăшлатăр есир? Йĕлĕк авал пурте хăвăртрах ĕçе пăрахса кайма шухăшлађђĕç. (Правтина) Есĕ ак, миçе çул слушит тăватăн. Халĕ те кунта килнĕ ђухта сана çыру илсе килеђђĕç.

Правтин. Мĕншĕн хăлиҫҫен каламарăн! (Тăрат) каҫарăр тархасшăн, мĕн те пулин кирлĕ йапала пулĕ-ха вăл!

Старотум. (Тăрат) Кайах! Анҫах санпа тата курса калаҫăп тесе шантаратăп хама спĕ.

Правтин. Калаҫăпăр-ха курса. Ыран кайма шухăшлатăр иккен ирпеле?

Старотум. Вара, пĕр 7 сехетре тухмалла пулĕ. (Правтин тухса кайат).

Милон. Епĕ ыран сирĕнпе хамăн салтаксене ăсатăп. Кайса систерес ҫынсене. (Милон кайат).

## 9-мĕш курăнни.

Простакова, Митрахван, Простаков, Йеремейевна, Старотум, Сухви.

Простакова. (Старотума) Ну, куртăн пулмалла ман Митрахван мĕнле ҫынне?

Скотинин. Куртăн епĕ мĕнле ҫынне? Е?

Старотум. Пит аван куртăм иксĕре те.

Скотинин. Сухвине каҫҫа паратăн-и мана?

Старотум. Ҫук!

Простакова. Аван каҫҫă-и Митрахван Сухвине?

Старотум. Наҫар.
Простакова. Мĕншĕн апла? } Пĕрле.
Скотинин. Мĕн канҫĕрлерĕ апла? }

Старотум. Сире иксĕре те пĕр шăппăн сăмах калам еппин. Сухвине урăх ҫынна килĕшнĕ.

Простакова. Ак путсĕр!

Скотинин. Вăл ухмаха йернĕ!

Простакова. Хăҫан кайаҫҫĕ вĕсем ман патăмран?

Скотинин. Илтрĕн, ыран ирхине. 7 сехетре.

Простакова. Ҫиҙĕ сехетре!

Скотинин. Ыран ирех тăран та... Скотинин-па ҫыхлансан хăвăртрах уйăрăлаймăн. (Кайат)

Простакова. Ҫиҙĕ сехетре! Пурте ҫутăлна ҫутăлманах тăрăр. Килĕр кунта пурсăр та. (Пурте Простакова патне пырса тăраҫҫĕ). Ыран ултă сехетре каретта кайри хапха патĕнҙе пултăр. Илтетне?

Простаков. Илтетĕп, амăш.

Простакова. (Йеремейевнана) Есĕ ҫĕрĕпе куҫна ан хуп. Сухви пӳлĕмĕн алăкĕ патĕнҙех лар. Вăрапсанах ман патна ҙупса пыр!

Йеремейевна. Ҫывăрмăп, ан хăра!

Простакова. (Митрахвана). Есĕ те 6 сехетре хатĕр пул. Виҫĕ тарҫа Сухви пӳлĕмĕ патне тăрат иккĕшне пусма ҫине.

Митрахван. Пурне те тăвăп.

Простакова. Кайăр пурсăр та. (Пурте кайаҫҫĕ). Пĕлетĕп мĕн тумаллине. Старик пăртак хархăшкалĕ те, каҫарĕ кайран. Епир хамăр ĕҫе тăвăпăрах!

*Ҙаршав.*

## 5-МĔШ ПАЙĔ.

### 1-мĕш курăнни.

Старотумпа Правтин.

Правтин. Астăватăн-и, кунти хуҫа арăмĕ каларĕ. Ҫан ҫыру вăл.

Старотум. Апла пулсан есĕ ку ҫуртри хуҫа арăмне пусарма шухăшлатăн иккен.

Правтин. Мана хам алла илме хушса йанă, мĕншĕн тесен вăл урса кайсан пĕтĕм йалти ҫынсене тĕнкине илĕ.

Старотум. Тавта пуҫ турра, пăртак лăплантарма та йурат ҫав.

Правтин. Ман шухăшпа аслă ҫын кĕҫĕн нине тивме... Мĕн шавлаҫҫĕ тата?

Старотум. Мĕн мулнă апла?

### 2-мĕш курăнни.

Ҫавсемех тата Сухви, Милон, Йэремеевна.

Сухви. Пиҙҙе! Тархасшăл ҫăл мана.

Милон. Асту, ап ҫынҫăн.

| | |
|---|---|
| Старотум. Мӗн пулҫӗ, йӑмӑкӑм?<br>Правтин. Ак пуҫсӗр ӗҫ!<br>Сухви. Ҫӗре сикет, пиҫҫе!<br>Йеремейевна. Пӗтрӗ ман пуҫ. | Пурте пӗрле. |

Милон. Пуҫсӗрсем! Килетӗп епӗ кунта, куратӑп вӗсем Сухвине прӗксӗр кареттӑна лартасшӑн.

Правтин. (Йеремейевнана) Халех кала, ӑҫта илсе кайасшӑн-ҫӗ ӑна...

Йеремейевна. Винҫет тума, хӑта, винҫет тума.

Простакова Пуҫсӗрсем, вӑрӑ-хурахсем. Пурне те вилиҫҫен хӗнеме хушӑп.

## 3-мӗш курӑнни.

Ҫавсемех Простаков, Митрахван.

Простакова. Мӗнле кил пуҫӗ епӗ! (Милон ҫине тӗллесе). Мана итлемеҫҫӗ, ыттисем хушнине итлеҫҫӗ.

| | |
|---|---|
| Простаков. Епӗ айӑплӑ-и?<br>Митрахван. Ҫын хутне кӗме!<br>Простакова. Пуҫӑнмастӑп та. | Харӑс. |

Правтин. Ку усал ӗҫе курса пулӑшма кирлӗ сан, мӗншӗн тесен есӗ унӑн упӑшка пуласси.

| | |
|---|---|
| Простакова. Упӑшка!<br>Простаков. Аван епир те!<br>Митрахван. Пурте пӗтрӗ! | Пӗрле. |

Правтин. Кун пек çынна сума суманшăн саккун хытă айăплат. Епě сана сута парас тетěп.

Простакова. (Ђěркуçлене). Тархасшăн каçар!

Правтин. Упăшкипе ывăлě те ěçе хутшăннă пулмалла.

Простаков. Ахалех айăплаççě мана. } Ђěркуçленсе.
Митрахван. Айăплă, кукка-атте! }

Простакова. Ех, сыспа хěрě, мěн туса хутăм.

## 4-мěш курăнăи.

Çавсемех тата Скотинин.

Скотинин. Ну, йăмăк, пит те аван лекнě... Е... мěн ку? Пурте ђěркуççи çинђе.

Простакова. Ах каçарăр тархасшăн! Хам айăплă. (Сухвине). Есě те, хěрěм, каçарсам мана! Акă кусем тăлăха йулаççě.

Скотинин. Йăмăк! Мěн ухмаха йертěн-и мěн?

Правтин. Ђарăн, Скотинин!

Простакова. Сана турă сăван парě хăвăн упăшкупа ырă пурăнма. Мана пěтерсе мěн усси пур-ха?

Сухви. (Старотума). Пиђђе, епě каçаратăп вěсене.

Простакова. Каçар тархасшăн хăта! Епě анкěл мар-çке...

Старотум. Пĕлетĕп: çын ăнкĕл марне, анҫах шуйттан пек те пулас пулмасҭ.

Милон. Вăл усал туни те, каçару ыйтни те пĕр пекех.

Правтин. (Старотума). Есĕ пĕҫĕкçĕ кăна шалăпă парсан вăл пĕтрĕ вара.

Старотум. Епĕ те каçаратăп. (Пурте ура çине тăраççĕ).

Простакова. Каçаратăн-и! Халĕ кăтартăп ĕнтĕ хам çынсене! Халĕ тĕпҫесе пĕлĕп ĕнтĕ, кам Сухвине алливҫен ĕçĕртнине! Çук, ĕмĕрне маймăп çак йапалана! Кăтартăп епĕ сире, вăрă-хурахсене!

Правтин. Мĕншĕн хĕнесшĕн-ха есĕ вĕсене?

Простакова. Ах турă! Епĕ хам çынсене хĕнес килнĕ вăхăтра хĕнеме те пултараймастăп-и мĕн?

Правтин. Есĕ хĕнес килсен, хĕнеме пултаратăп тетĕн иккен?

Скотинин. Творенин хăй тарçине хĕнеме те пултараймасҭ-и мĕн, сан шухăшпа?

Правтин. Хĕнеме! Ҫапак та есĕ Скотининах иккен!

Простакова. Творенин хăй тарçине те хĕнеме пултараймасҭ-и? Ак тата! Мĕншĕн ха творенсене панă тесе уккас çырнă?

Старотум. Тытăннă уккаса ăнлантарса пама!

Простакова. Кулма-и? Епĕ сире халөх ак... (Вĕçем патне пыма тăрат).

Правтин. Ђарăн! (Хут кăларат) Акă мĕн. Тӳре-шара хушнипе халех хăвăр йалти хресђенсене пухса, уккаса вуласа парас пулат. Санăн арăму усал пирки, есĕ пăртак ухмахрах пирки, епĕ, тӳре-шара хушнипе, сире хам алла илетĕп.

Простаков. Мĕне перĕнсе çитрĕмĕр? Е?

Простакова. Йепле? Татах-и? Мĕншĕн? Епĕ хам çуртра хуçа мар-и?

Правтин. Усал хуçа—кил хуçи—мар, тӳре-шара ăна тӳсме пултараймаст. (Кайса ыйтат) Кайах есĕ!

Простаков. Камран-ха ку? (Кайат)

Простакова. Ах турă, пĕтрĕмĕр! пĕтрĕмĕр!

Скотинин. Ех-хе-хе-х! Капла мана та йĕрке çитĕ. Капла кирек-мĕнле Скотинин та лекме пултарат. Вĕçем-ха епĕ кунтан ура-ала тĕрĕс ђух.

Правтин. (Скотинина) Есĕ те сыснасене çынсенђен мала хуран, теççĕ.

Скотинин. Мала хумасăр! Йепле мала хурас мар-ха. Çынсем манпа ăслă сăмахсем калаçаççĕ, сыснасем хуршинђе епĕ хам ђи ăсли.

Простакова. Пурне те çухатрăм! Пĕтĕмпех пĕтрĕм!

Скотинин. (Старотума) Епĕ сан патна ĕçпе килнĕђђĕ те... Кађђă...

Старотум. (Милон ҫине кӑтартса) Акӑ вӑл!

Скотинин. Е, манӑн кунта нимӗн ӗҫ те ҫук апл
пулсан. Урапача кӳл те...

Правтин. Вӗҫтере пар сыснусем патне. Анҫах а
ман Скотининсене калама, вӗсем ытлашши ан иртӗнҫӗр.

Скотинин. Калӑп! Йепле хамӑн хурӑнташсене си
стерес мар! Калӑп, вӗсем ҫынсене...

Правтин. Йуратарах паҫҫӗр, йе...

Скотинин. Йе...

Правтин. Ан хӗнеҫҫӗр.

Скотинин. Ан хӗнеҫҫӗр (Кайат).

## 5-мӗш курӑнни.

Простакова, Старотум, Правтин, Митрах
ван, Сухви тата Йеремейовна.

Простакова. (Правтина) Каҫар тархасшӑн, ан пӗ
тер мана! Мӗн мана пӗтерниие, тупӑш пулӗ-и мӗн сана
Пӗр виҫӗ куна хӑвар-ӗҫне! Епӗ кӑтартӑттӑм вӗсене.

Правтин. Пӗр куна та хӑвармастӑп!

Старотум. Вӑл пӗр кунта та темӗн туса пӑрахӗ

Простакова. Мӗн, йепле-ха, пӑрӑмсене тӳлес
Митрахвана вӗрентекенсене тӳлесе татман.

Правтин. Вӗрентекенӗсене? Йеремейевна, ҫӗнс
кил-ха вӗсене, кунта-и вӗсем?

Йеремейевна. Персе çитрĕç пулмалла. Нимĕçе те йăхăрас-и?

Правтин. Пурне те йăхăр (Йеремейевна кайат) Есĕ, тăклађă, нимĕн çинђен те ан шухăшла, пур ĕçе те майа кӳрĕпĕр.

Старотум. Сана хăвнах аван пулĕ, çынсене усал тума ирĕкӳ çухалсан.

Простакова. Тавта пуç ырă сăмахшăн! Йеплеха вăл, хам килте хам хуçа мар.

### 6-мĕш курăнни.

Çавсемех тата Йеремейевна, Враљман, Куттейкин, Ђихвиркин.

Йеремейевна. Акă вĕсем пирĕн, шăлнăмсем.

Враљман. (Правтина) Ваш высоко-и плахороти, ху патна ђĕнтертĕн-и?

Куттейкин. (Правтина) Ђĕнђĕç те килме турă сăвап пађĕ.

Ђихвиркин. (Правтина) Мĕн хуларăн, ваш плахороти!

Старотум. Е, Враљман, есĕ мар-и?

Враљман. Ай-ай ай-ай! Есĕ-и ха ман улпутăм. Сывă пурнатăн-и?

Старотум. Йепле паллас мар? Ман патăмра висĕ çул куҫăрта пурăнҫĕ.

Правтин. Аван вĕрентекен!

Старотум. Есĕ вĕрентсе пурăнатăн иккен. Враљман! Епĕ есĕ путсĕр çын мар тесе, хăв пĕлмен ĕçе тытăнмăн тесе.

Враљман. Мĕн тăвăн? Мускавра çÿрерĕм сĕтĕрĕнсе висĕ уйăх, куҫăр кирлĕ мар, теççĕ. Выçса вилес мар тесе, вĕрентме тытăнтăм...

Правтин. Тÿре-шара хушнипе епĕ çак кил хуçи пулатăп. Сире пурсăра та хăвалас тетĕп.

Ҫихвиркин. Кунтан аванни те çук!

Куттейкин. Хăвалас тетĕн еппин апла? Анҫах малтан укçа тĕлĕшĕнҫен...

Правтин. Мĕн кирлĕ сана?

Куттейкин. Ман нумай илмелле укçа. Çур çул вĕрентни, атăшăн виç çулхи, кунта килнĕшĕн, тата...

Простакова. Ёмĕтсĕр есĕ, Куттейкин! Мĕншĕн ун ҫухлĕ?

Правтин. Ан канçĕрле есĕ!

Простакова. Ҫăннипе каласан, мĕне вĕрентрĕн есĕ Митрахвана?

Куттейкин. Вăл ман ĕç мар, Митрахванăн хăйĕн.

Правтин. Йурĕ, йурĕ (Ҫихвиркина) Сана нумай тÿлемелле-и?

Ђихвиркин. Мана-и? Нимĕн те сук.

Простакова. Ăна пĕр çулшăн вунă тенкĕ панă, пĕр çулшăн пĕр пус та тӳлемен.

Ђихвиркин. Ик çулта вунă тенкĕлех атă тăхăнса пĕтернӗ,-ĕç пĕтрĕ те.

Правтин. Вĕрертнĕшĕн?

Ђихвиркин. Нимĕн те кирлĕ мар.

Старотум. Йепле нимĕн те кирлĕ мар?

Ђихвиркин. Нимĕн те илместĕп, мĕншĕн тесен вăл нимĕне те вĕренеймерĕ.

Старотум. Çапах та шăлуне тӳлеме кирлĕ.

Ђихвиркин. Епĕ халăхшăн 20 çул салтакра олушит турăм, пĕр пус укçа та илмен.

(Старотупма Милон укçа кăлараççĕ).

Ђуттейкин. Намăса тухрăм епĕ, çылăхлăскер!

Старотум. Ме сана, есĕ ырă кăмăллăшăн!

Ђихвиркин. Тавта пуç, ваш плахороти. Куђенеç пама пултаратăн, анђах ĕçлемесĕр укçа илме йуратмастăп.

Милон. Акă сана тата (Парат)

Ђихвиркин. Тата, тавта пуç! (Правтин та парат) Мĕншĕн епĕ сирĕн кăмăлна кайрăм-ха?

Правтин. Куттейкин пек çын мар есĕ, çавăнпа.

Ђихвиркин. Епĕ, ваш плахороти, салтак!

Правтин. Кайах ĕнтĕ, Ђихвиркин. (Ђихвиркин

кайат̆) Есӗ, Куттейкин, ырап килсе хӑв хуҫа арӑмӗпе тат ӗҫне.

Куттейкин. Хӑйӗнпе? Нимӗн те кирлӗ мар.

Враӡман. (Старотума) Авалхи тарҫуна ан пӑрах, ваш высОко плахороти. Хупа пӗрле илсе кай.

Старотум. Есӗ, Враӡман, лашасене пӑхма та маннӑ пулӗ?

Враӡман. Мӗн манмалла. Епӗ ку ҫуртра пураннӑ ӡух, лашасемпе пураннӑ пекех туйӑнат̆.ӡӗ.

## 7-мӗш курӑнни.

Ҫавсемех тата камертинер.

Камертинер. Кареттӑ хатӗр.

Враӡман. Хӑна леҫсе йама хушатӑн-и?

Старотум. Кайса лар ларкӑҫ ҫине. (Враӡман тухса кайат̆).

## 8-мӗш курӑнни.

Простакова, Старотум, Милон, Сухви, Правтин, Митрахван тата Йеремейевна.

Старотум. (Правтина) (Сувхине Милон аллине тытса) Епир те кайатпӑр ӗнтӗ сыв пул, тусӑм!

Правтин. Телейлӗ пулӑр, ӡипер кайӑр.

Простакова. (Ывăлне ыталасах илсе) Есĕ анҫах йултăн ĕнтĕ, Митрахван ҫувăм!

Митрахван. Мĕн сыпсăнатăн, анне! Кай ман патăмран!

Простакова. Есĕ те, есĕ те, пăрахрăн-и мана? Ех, путсĕр! (Тăнсăр пулат).

Сухви. Ах турă, вăл ăнран кайнă?

Старотум. Пулăш ăна, пулăш! (Сухвипе Йеремейевна пулăшаççĕ).

Правтин. (Митрахвана) Ех путсĕр, аннӳне хаpĕç пымалла-и? Сана вăл ҫунтан йуратнипе пулҫĕ ҫак усал ĕç.

Митрахван. Вăл хăй темĕскер, систермесĕр...

Правтин. Ухмах!

Старотум. (Йеремейевна) Мĕнле вăл? Мĕнле?

Йеремейевна. Тăна кĕрĕ-ха, хăта, кĕрĕ.

Правтин. Санпа мĕн тумаллине пĕлетĕп епĕ. Кайха ак салтака!

Митрахван. Маншăн пулсан пурĕ пĕр!

Простакова. (Тăна кĕрсе) Пĕтрĕм епĕ пĕтĕмпех. Мĕн пур ĕнтĕ ман? Нимĕн те ҫук! Ывăлăм та ҫук (Йĕрет).

Старотум. Акă мĕн тăват усал кăмăллă пулни.

*Ҫаршав.*